ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
февраль
23
ШĂМАТКУН
№ 39 (8691)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

Паян Совет халăхĕ тата унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ вăтăр тăватă çул тултарнине уявлаççĕ.

Сывă пулчăр Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен çĕнтерĕвĕсене хавхалантаракан̆ĕ тата организаторĕ—пирĕн аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр, гениллĕ полководец Сталин юлташ!

Иосиф Виссарионович СТАЛИН.

СССР Çар Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ
А. М. ВАСИЛЕВСКИЙ.

СССР Тинĕс-Çар Министрĕ Вице-Адмирал
Н. Г. КУЗНЕЦОВ.

СССР Союзĕн Çар Министрĕн ПРИКАЗĔ

1952 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. № 15. Мускав хули.

Юлташсем — салтаксемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсемпе генералсем!

Паян совет халăхĕ тата унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне палăртаççĕ.

Пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсем 34 çул тултарнă ятпа сире саламлатăп тата сывлăх сунатăп.

Совет Çарĕн пĕтĕм личнăй составне çар тата политика пĕлĕвне ÿстерес, войскăсем çар ĕçĕ тĕлĕшĕнчен хатĕр тăрассине малалла хăпартас тата пирĕн аслă Тăван çĕршывăн государство интересĕсене сыхлас тĕлĕшпе хăйсен çар тивĕçне чыслăн пурнăçлас ĕçре çĕнĕ, тата пысăкрах çитĕнÿсем тума ырă сунатăп.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа çапла тума хушатăп:

Паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, пирĕн Тăван çĕршыв столицинче — Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче, çавăн пекех тата Калининградра, Львовра, Хабаровскра, Владивостокра, герой-хуласенче: Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре тата Одессăра артиллерирен çирĕм хут харăс персе салют памалла.

Сывă пулчăр Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пулчăр геройла совет халăхĕпе пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ — пирĕн çĕнтерÿсен хавхалантараканĕпе организаторĕ!

Сывă пултăр аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр, гениллĕ полководец, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ СТАЛИН юлташ!

СССР Союзĕн Çар Министрĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ А. ВАСИЛЕВСКИЙ.

СССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕн ПРИКАЗĔ

1952 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. № 50. Мускав хули.

Юлташсем — матроссемпе салтаксем, старшинасемпе сержантсем!

Юлташсем—офицерсем, адмиралсем тата генералсем!

Паян çар морякĕсем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине уявлаççĕ.

Ленин—Сталинăн аслă партийĕ туса хунă тата пăхса ÿстернĕ Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ геройла паттăр çул утса тухрĕç, вĕсем СССР государство интересĕсене шанчăклăн сыхласа тăнине кăтартаççĕ. Большевиксен партийĕ, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ ертсе пыракан Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ хăйсен мухтавлă уявне личнăй состава çар енĕпе хатĕрлес, çар тата политика енĕпе воспитани парас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

Тинĕс-Çар Вăйĕсен личнăй составĕн малашне те çар хатĕрленĕвне ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пымалла, боевой тата политика хатĕрленĕвĕн квалификациллĕ специалисчĕсене — отличниксене çитĕнтерсе пымалла, çар дисциплинине, сыхăлăха тата хăйсен речĕсенчи организацилĕхе тата ытларах тĕреклетмелле.

Юлташсем—матроссемпе салтаксем, старшинасемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсем, адмиралсем тата генералсем!

Сире Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă уяв ячĕпе саламлатăп тата сывлăх сунатăп, çарпа политика хатĕрленĕвĕнче çĕнĕ, тата пысăкрах çитĕнÿсем тума сунатăп.

Сывă пултăр пирĕн хăватлă советлă Тăван çĕршыв!

Сывă пулчăр геройла совет халăхĕ тата унăн çĕнтерÿллĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр Ленин—Сталинăн аслă партийĕ!

Хамăрăн аслă та ăслă çулпуçăмăра тата полководеца СТАЛИН юлташа мухтав!

СССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕ
Вице-Адмирал Н. КУЗНЕЦОВ.

Мире хÿтĕлекен хăватлă Çар

Паян пĕтĕм совет халăхĕ Тăван çĕршывăн интересĕсене шанчăклăн хÿтĕлевен, совет çыннисен мирлĕ ĕçне тимлĕ сыхлакан Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине уявлать.

Çак чаплă уява пирĕн çĕршыври ĕççыннисем коммунизм тăвас ĕçре çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ тунă условире, тĕнчери мĕнпур ырă шухăшлă, мĕнпур тÿре кăмăллă çынсем вăрçа хирĕç, миршĕн, социализмшăн, демократишĕн кĕрешне условире палăртаççĕ.

СССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене—Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотне гениллĕ çулпуçăмăрсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин хамăрăн Тăван çĕршывăн чысне, ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмаллăхне çирĕппĕн хÿтĕлесе тăма тунă.

Пурне те паллă ĕнтĕ, совет государствин чи пирвайхи декречĕ—мир тума чĕнекен декрет пулнă. Анчах çамрăк Совет республикин мирлĕ шухăш-кăмăлĕсене этемлĕхĕн чи хаяр тăшманĕсем—Америкăпа Англири тата ытти çĕршывсенчи империалистсем йышăнман, вĕсем совет республикине пĕтерме тăрăшнă.

Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă ют çĕршыв захватчикĕсемпе белогвардеецсене отпор панă вăхăтра çуралнă Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ, парти тата Ленинпа Сталин ертсе пынипе, çав захватчиксене çапса аркатрĕç, совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвĕсене хÿтĕлесе хăварчĕç, тăван çĕршыва хăрушлăхран хăтарчĕç.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн чаплă çĕнтерĕвĕсем пурте В. И. Ленин тата И. В. Сталин ячĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Большевиксен партийĕпе совет халăхĕ, Сталин юлташ ертсе пынипе, çĕршыва индустриализацилемелли, ялхуçалăхне коллективизацилемелли сталинла программăсене пурнăçа кĕртнипе пула Совет Союзĕ кая юлнă çĕршывран индустриллĕ, колхозлă хăватлă держава, оборона валли мĕн кирлине пĕтĕмпех тата çителĕклĕ туса хатĕрлеме пултаракан, кирек мĕнле ăнсăртлăха та сирсе яма хатĕр тăракан çĕршыв пулса тăчĕ.

Социализмлă çĕршыв хăватне штыкпа тĕрĕслеме империалистсем темиçе хутчен те хăтланса пăхрĕç. Паттăр Хĕçпăшаллă Вăйсем вĕсене кашнинчех аркатса тăкрĕç. Анчах çак уроксенчен нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсем валли тивĕçлĕ вывод тумарĕç. Вĕсем, Америкăпа Англири пуç пулса тăракан ушкăнсем хĕтĕртнипе, тĕнчере хуçаланса пурăнас ĕмĕтпе пирĕн чечекленекен çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнчĕç.

Большевиксен партийĕ тата аслă Сталин чĕннипе, пĕтĕм совет халăхĕ Тăван çĕршыва хÿтĕлеме пĕр çын пек харăс çĕкленчĕ. Пирĕн мухтавлă Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ гитлеровецсене хирĕç кĕрешнĕ чухне тĕнче историйĕнче пулман хăюлăхпа паттăрлăх кăтартрĕç. Вĕсем тăшмана хăйĕн ирсĕр йăвинче—фашистла Германире çапса аркатрĕç. Вĕсем, кунпа пĕрлех, Европăри халăхсене, вăл шутра Германи халăхне те, фашистла чуралăхран хăтарчĕç, тĕнчери цивилизацие фашистла вăрă-хурахсенчен çăлса хăварчĕç.

Аслă Отечественнăй вăрçăран Совет Союзĕ, ăна хирĕç тĕнчери реакцин пĕтĕм вăйĕ кĕрешрĕ пулин те, вăрçăччен хинчен вăйлăрах çĕршыв пулса тухрĕ. Тепĕр виçĕ уйăхран вăл империалистла Японие çапса аркатрĕ, çав кĕрешÿ вара аслă Китай халăхне хăйĕн ĕмĕрхи çутă ĕмĕтне пурнăçлама—империалистсен чуралăхĕнчен хăтăлса пĕтĕм кăкăрпа ирĕклĕн сывласа яма май пачĕ, Азири миллионшар халăхсене ирĕклĕхшĕн кĕрешме çĕклерĕ.

Çапла ĕнтĕ, Ленин—Сталин партийĕ, чи паллă полководецпа стратег Сталин Генералиссимус ертсе пынипе, пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсем çĕнтерÿсен чаплă та анлă çулне паттăррăн утса тухрĕç, хăйсен çапăçури ялавĕсене ĕмĕрлĕхе мухтава кăларчĕç.

Совет халăхĕ халĕ хăйĕн Тăван çĕршывĕн вăй-хăватне татах тĕреклетессишĕн ырми-канми ĕçлет, çĕнĕ вăрçă чĕртме ĕмĕтленекенсен ирсĕр ĕçĕсене чунтан чĕререн питлет. Мухтавлă Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ государство интересĕсене шанчăклăн хÿтĕлесе тăраççĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви пирĕн халăхăн мĕнпур вăйне коммунизм тăвасси аслă программăна пурнăçлассишĕн кĕрешме мобилизацилеççĕ.

Совет Союзĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче США, Англи тата ытти империалистла çĕршывсене çарсемпе хĕçпăшалсем шутне чакарма, атомлă, бактериллĕ тата ытти çавăн йышши хĕçпăшалсем тăвассине чарма, пилĕк аслă çĕршыв хушшинче Мир Пакчĕ тума, вăрçă пуçарас енĕпе пропагандăлассине чарса лартма темиçе хутчен те сĕнÿ пачĕ. Вĕсем Совет правительстви панă сĕнÿсене пĕрмаях сирсе сирсе пыраççĕ. Пуриччен ытла Америка империалисчĕсем, тĕнчере пуç пулса тăма ĕмĕтленесе, уççăнах Совет Союзне хирĕç, çавăн пекех Китайпа халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç виççĕмĕш тĕнче вăрçи пуçарма чĕнеççĕ.

Анчах вĕсем çакна асра тытчăр: пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăма ĕмĕтленекенсене пурне те пĕр шăпа—Гитлер шăпи кĕтет. Совет халăхĕ империалистла çăткăнсем юнанинчен хăрамасть. Тĕнчери çĕнĕ вăрçăран Америкăри тата ытти буржуаллă çĕршывсенчи капиталистсен хăрамалла, мĕншĕн тесен çĕнĕ вăрçă тĕнчери капитализма тĕп тăвасси патне илсе пырĕ.

Совет Союзĕ малашне те çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес политикăна, çирĕп миршĕн кĕрешес политикăна пĕр пăркаланмасăр тытса пырать. Сталин юлташ «Правда» корреспондентне панă ответра тĕнчери миллионшар çынсен чĕрине ырă шанчăк кĕртрĕ: хальхи вăхăта илсен, вăрçă пур пĕрех пулать темелле мар, **«Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хÿтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕреклене»**, терĕ.

Хамăрăн социализмлă Тăван çĕршыв кун-çулĕшĕн ответлăха туйнă йăлланса, совет воинĕсем çарти ăсталăха кунтан-кун ÿстерсе пыраççĕ. Совет Çарĕн дисциплинине—çапăçас пултарулăхăн никĕсне кунсерен çирĕплетеççĕ.

Сывă пулчăр пирĕн çĕршывăн мухтавлă та паттăр Хĕçпăшаллă Вăйĕсем!

Механизаторсен пуçарăвне йышăнаççĕ

ЧУРАЧĂК. Малта пыракан механизаторсем мĕнпур МТС работникĕсене чĕнсе каланине сÿтсе явса, МТС-ра ĕçлекенсем кăçал машинăсемпе пĕлтĕрхинчен тухăçлăрах ĕçлеме, вăйлă тырпул туса илме пысăк майсем пуррине палăртрĕç. Социализмла ăмăртса ĕçлеме пулса, трактористсемпе комбайнерсем тата ытти механизаторсем кăçал пур ĕçсене те питĕ лайăх тума, колхозсене кашни гектартан 17—18-шар центнер тырпул туса илме пулăшма, кашни условнăй трактор пуçне 600 гектартан кая мар сухалана чухлĕ ĕç тума, 5 процент горючи перекетлесе хăварма обязательство илчĕç.

МТС-ри механизаторсем Шăхасан МТС-ĕнче ĕçлекенсемпе социализмла ăмăртса ĕçлеме йыхăрчĕç.

И. КОНСТАНТИНОВ.

Совет Çарĕ социализмлă Тăван çĕршывăн государство интересĕсене çирĕп сыхлать

В. МОСКОВСКИЙ,
генерал-майор

Февралĕн 23-мĕшĕнче Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене организациленĕренпе 34 çул çитет. Историри çак мухтавлă куна пирĕн халăх политикăллă тата ĕçри çĕкленÿпе палăртать.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе пирĕн Тăван çĕршыври ĕçсыннисем коммунизм тумăлли сталинла аслă программăпа ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Нумаях пулмасть СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ 1951 çулта СССР халăх хуçалăхĕн государство планне тултарни çинчен пичетлесе кăларнă пĕлтерÿ Совет Союзĕн промышленноçĕпе ялхуçалăхĕ çĕмĕрен хăватлăн çĕкленнине, халăх массисен пурнăçĕ малалла лайăхланса, культури ÿссе пынине уççăн кăтартса парĕ.

Пирĕн хăватлă социализмлă держава çултан-çул çĕнĕ çитĕнÿсем туса, çĕнĕ вăй илсе пырать, коммунизмăн материально-техникăллă никĕсĕ ÿснĕçем ÿссе тĕреклент. Совет халăхĕ малалла шанчăклă пăхать, вăл хăйĕн кун-çулĕшĕн хăрамасть. Унăн государство интересĕсене, Совет Союзĕнчи халăхсен телейне аслă çĕнтерÿсем туса ĕмĕрлĕхе чăпа тухнă Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ сыхласа тăраççĕ.

* * *

Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене большевиксен партийĕ, ĕçсыннисен аслă сăлпуçĕсем Ленинпа Сталин тунă. Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем хăйсем пуçланса кайнă вăхăтранпа кĕрешÿпе çĕнтерÿсен мухтавлă çулне утса тухрĕç. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн пĕтĕм исторйĕ паттăрлăхăн, Тăван çĕршыва чунчĕререн парăнса, хăйсен çар тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртнин çутă тĕслĕхĕ пулса тăрать.

Совет Çарĕ—çĕнĕ сăнарлă çар, капитализм чуралăхĕнчен ирĕке тухнă рабочисемпе хресченсен çарĕ, чи малта пыракан çар организацийĕ. Вăл социализмăн аслă вăйĕсене палăртса тăрать. Совет Çарĕ—пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинчи тăванлăх çарĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлекен çар. Ăна хăй пуçланса кайнă кунсенчен пуçласах интернационализм майлă, ытти çĕршывсенчи халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хисеплеме воспитани парса çитĕнтернĕ.

Çак уйрăмлăхсем Совет Çарне вăй-хăват паракан çăлкуçĕ, унăн пĕтĕм тĕнче историйĕнчи паллă çĕнтерÿсен çăлкуçĕ пулса тăраççĕ. Ун пек вăйлă çар капитализмлă çĕршывсенче пĕр çĕршывра та çук. Совет Çарĕ пĕр-пĕр урăх çĕршыва хирĕç нихăçан та, нимĕнле агрессиллĕ ĕçсем те туман.

Совет государствин малтанхи кунсенчен пуçласах рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕрремĕш государствине çĕмĕрсе тăкма шутланă шалти тата тулашри тăшмансене хирĕç хаяр кĕрешмелле пулчĕ. 1918 çулăн пуçламăшĕнче нимĕç империалисчĕсем Совет республикине хирĕç поход организацилерĕç. Пирĕн çарăн çамрăк отрячĕсем çав тери лайăх хĕçпăшалланнă Германи çаткăнне хирĕç паттăр çапăçнă. Нарвăпа Псков патĕнче нимĕç оккупанчĕсене тапăнлăнах çĕмĕрсе тăкнă. 1918 çулхи февралĕн 23-мĕшне, революциллĕ çар отрячĕсем кайзерла Германи çарĕсене тапăнлăн çĕмĕрсе тăкнă куна, совет халăхĕ кашни çулах Совет Çарĕ пуçланнă кун тесе, пĕтĕм халăх уявĕ пек палăртать.

1918 çулăн малтанхи çур çулĕнче Америка, Англи, Франци тата Япони захватчикĕсем, Российăри контрреволюципе усă курса, пирĕн Тăван çĕршыва килсе тапăнчĕç.

Совет государствин йывăр кунсене пурăнса ирттермелле пулчĕ. Ун территорийĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне тăшман ярса илчĕ. Çамрăк республика апат-çимĕç, чĕртавар тата топливо парса тăракан тĕп районсенчен татăлчĕ. «Ун чухне пирĕн çĕршыв çине 14 государство тапăнса килнĕ. Анчах эпир пуçа ÿсса ярман. хăраса ÿкмен. Вăрçă вучĕ айĕнче ун чухне эпир Хĕрлĕ Çар организацилерĕ, хамăрăн çĕршыва çар лагерĕ туса хунă. Аслă Ленин тăвачĕ ун чухне интервентсене хирĕç вăрçма пире хавхалантарса пынă. Эпир интервентсене çĕмĕрсе тăкрăмăр, сухатнă территорисене пĕтĕмпех каялла илтĕмĕр, çĕнтертĕмĕр» (Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен, 5-мĕш изд. 38 стр.).

Совет Российине хирĕç ют çĕршывсем хĕçпăшаллă интервенци тума хăтланнисем пурте путланса ларни пирĕн халăхпа унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен çав тери пысăк çĕнтерĕвĕ пулнă.

Гражлан вăрçине ют çĕршыв интервенцийĕн çулĕсенче тунă пур çĕнтерÿсемшĕн те совет халăхĕ В. И. Ленинпа И. В. Сталина тав тăвать. Вĕсем гениллĕ ертсе пыни интервентсемпе белогвардеецсене çĕмĕрсе тăкма май пачĕ. Совет государствине хÿтĕлес ĕçе организациленĕ чухне Сталин юлташ В. И. Ленинăн чи çывăх пулăшаканĕ пулнă.

Сталин юлташ стратегин, çапăçас искусствăпа тактикăн çĕнĕ принципĕсене тунă. çакă ĕнтĕ çĕнĕ, совет çар искусстви, капитализмлă государствăсен çарĕсен çар искусствинчен пачах уйрăм тăракан çар искусстви пулнă.

Сталин юлташ чи пахха çар стратегийĕн планĕсене туса хатĕрленĕ, вăл Совет Çарĕсен чи паллă çапăçу операцийĕсене ертсе пынă. Царицынпа Пермь патĕнче, Юденича хирĕç тата Деникина хирĕç çапăçнă çĕрте, хĕвеланăçĕнче Польшăна хирĕç тата кăнтăрта Врангеле хирĕç çапăçнă чухне—пур çĕрте те Сталин юлташăн хурçă пек çирĕп ирĕкĕпе стратегиллĕ генийĕ çĕнтерÿ кÿнĕ.

Гражлан вăрçи хыççăн пирĕн çĕршыв мирлĕ строительствăна тытăнчĕ. Ленин—Сталин партийĕ ĕçсыннисене халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма çĕклерĕ. Çавăнпа пĕрлех большевиксен партийĕ, Ленинпа Сталин гражлан вăрçинче интервентсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн та империалистсем пирĕн социализмлă Тăван çĕршыва хирĕç çĕнĕрен вăрçă авантюрисем тăвас хăрушлăх пĕтменни çинчен совет халăхне яланах асăрхаттарса пычĕç. Вăрçăпа тапăнас хăрушлăха яланах асра тытма кирлине кăтартса. В. И. Ленин çапла каланă: «...Хамăрăн мирлĕ строительствăна тытăнса, эпир çак ĕçе татти-сыпписĕр туса пыма пĕтĕм вăя хурăпăр. Çав вăхăтрах, юлташсем, сыхă тăрăр, хамăр çĕршывăн тата хамăр Хĕрлĕ Çарăн оборона пултарулăхне куç шăрçине сыхланă пек сыхлăр...» (Соч., 33 т., 125 стр.).

Ленинпа Сталин кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе, большевиксен партийĕ пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене çирĕплетме кирлĕ ĕçсене туса ирттерчĕ. Совет Çарне çĕнĕлле йĕркеленĕ, ăна ку чухнехи вăхăта кура организациленĕ. Çара илмелли система тунă, çар ĕçне вĕрентекен вăтам тата аслă шкулсем уçнă, тĕнчери пĕрремĕш вăрçăпа гражлан вăрçин опытне шута илсе, уставсемпе наставленисем çырса хатĕрленĕ.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ историре чи кĕске срокра пирĕн çĕршыва кая юлнă çĕршывран малта тăракан индустриллĕ-колхозлă держава туса хучĕ. Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче Совет Союзĕ оборона пултарулăхĕ тĕлĕшĕнчен хăватлă çĕршыв. кирек мĕнле ăнсăртлăха та кĕтсе илме хатĕр çĕршыв пулса тăчĕ. Пирĕн халăх хăйĕн çарне çапăçма кирлĕ чи лайăх техника пама вăйне те, ĕçне те шеллесе тăмарĕ. Хĕçпăшаллă Вăйсен хăвачĕпе техники çултан-çул ÿссе пычĕ. Совет Çарĕ механизациленĕ тата моторизациленĕ çар пулса тăчĕ тата пахалăхĕ енчен ун хĕçпăшалĕ капитализмлă çĕршывсенчи çарсен хĕçпăшалĕнчен лайăхрах.

Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен системинче бронетанковăй тата механизациленĕ çарсем туса. вĕсене ют çĕршывсенчи пур пысăк машинăсенчен те лайăхрах машинăсем панă. Çарпа пĕрле унăн составĕнче Совет государствин Сывлăш-Çар Вăйĕсем ÿссе пычĕç.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотне техникăлла реконструкцилес ĕç Сталин юлташ ячĕпе çыхăнса тăрать. Çак калама çук пысăк ĕçсене—çар техники тата çар, авиаци, флот валли хĕçпăшал туса кăларас ĕçе тÿрех Сталин юлташ ертсе пынипе тунă. «Вăл кăна.—тесе çырнă Ворошилов юлташ,—партипе государствăн чи лайăх сыннисене çĕршыва индустриализацилессишĕн тата çак никĕç çинче пĕтĕм халăх хуçалăхне техникăпа хĕçпăшаллантарассишĕн кĕрешĕве ертсе кайма пултарчĕ. Çакна пула кăна пирĕн çар тĕнчери кирек хăш çартан та техникăпа лайăхрах хĕçпăшалланчĕ» («Сталин тата СССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем», Госполитиздат, 1951, 81—82 стр.).

Совет Çарне хăватлă техника панă вăхăтрах, Ленин—Сталин партийĕ ыйăнма пĕлмесĕр пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсем валли техникăна лайăх пĕлекен, техника мĕн пама пултарнине уйтан пĕтĕмпех илме пултаракан квалификациллĕ кадрсем вĕрентсе ÿстерчĕ. Большевиксен партийĕ çарăн пĕтĕм составне политикăпа идея тĕлĕшĕнчен вĕрентсе писĕхтерес ĕçе. пирĕн воинсене совет патриочĕсем пулма, халăх ĕçĕшĕн çирĕп тăракан çынсем пулма, социализмлă Тăван çĕршывăн тăшманĕсене чунтан-чĕререн курайман çынсем пулма воспитани парас ĕçе пысăк вырăна хунă. халĕ те пысăк вырăна хурать.

Социализм строительствин çулĕсенче империалистла государствăсем пирĕн Тăван çĕршыва темиçе хутчен те тапăнчĕç. Анчах социализм çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем. хăйсен совет халăхĕ умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçласа, вăрçă пуçаракансене кашнинчех çĕмĕре-çĕмĕре тăкрĕç.

* * *

1941 çулхи июньре фашистла Германи ултавлăн, вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕр Совет Союзне тапăнчĕ. Вăл вăйлă та хаяр тăшман пулнă. Фашистла Германие вăй-хăват илме США империалисчĕсем активлă пулăшнă. Вĕсем Германи фашизмне ÿстерсе çитĕнтернĕ, ăна вĕсем Совет Союзне хирĕç. Европăри демократиллĕ юхăма хирĕç кĕрешмелли тĕнчери реакцин тĕп вăйĕ тесе шутланă.

Империалистсен авантюристла планĕсем пĕтĕмĕшпех путланчĕç. Пирĕн паттăр Çар, Совет Союзĕн Генералиссимусĕн И. В. Сталинăн стратегиллĕ планĕсене пурнăçа кĕртсе, Мускав патĕнчи аслă çапăçурах фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме çук текен юмаха кĕл пек салатса ячĕ.

Вунă çул каярах, 1942 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче кăларнă 55-мĕш номерлĕ приказра Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: «Ултавлăн тата пĕтмен сĕртен тапăннă пирки вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче пулнă усăллă енсем нимĕçсен текех çук ĕнтĕ. Нимĕçсен фашистла войскисен ултавлăн тата сасартăк тапăннă пирки пулнă резерв пĕтĕмпех пĕтнĕ. Çапла вара, нимĕç фашисчĕсен кĕтмен сĕртен тапăннă пирки вăрçă условийĕсенче пулса тăнă пĕртанмарлăх пĕтсе ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрçă кун-çулне кĕтмен сĕртен тапăннă пирки. пулнă факторсем мар, яланах пыракан факторсем: тылăн çирĕплĕхĕ, çарăн шухăш-кăмăлĕ, дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ, çарсене хĕçпăшаллантарни, çарăн начальство составĕн организаторла пултарулăхĕ татса параççĕ. Кунта çак обстоятельствăна та палăртса хăвармалла: кĕтмен сĕртен тапăннă пирки пулнă лайăх самант нимĕçсен арсеналĕнче пĕтсенех, нимĕçсен фашистла çарĕ катастрофа умне тухса тăчĕ» (Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен. 5-мĕш изд.. 43—44 стр.).

Вăрçăн яланах пыракан факторĕсем çинчен, çав факторсем ĕçе татса пани çинчен калакан сталинла тезис вăрçă çинчен вĕрентекен марксистла-ленинла наукăна малалла аталантарчĕ. вăрçă мĕнле пырасси тата мĕнле пĕтесси государствăн экономикăпа политика аталанăвĕ, унăн идеологийĕ мĕнле пулнинчен, унăн кадрĕсем мĕнле хатĕрленнинчен. вăрçăсен çитĕнÿсене килнине кăтартса пачĕ.

Вăрçăн яланах пыракан факторĕсем çинчен калакан сталинла тезис теорипе практика тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк вырăнта тăрать. Çак факторсене шута илсе вĕсемпе тĕрĕс усă курни вăрçă ĕçĕпе организаторла ĕçре вăрçă кун-çулне татса паракан тĕп палăчĕсене малти вырăна кăларса тăратма май парать.

Вăрçăсен историйĕнчи чи аслă çапăçăва—Сталинград патĕнчи çапăçура Совет Çарĕ чаплă çĕнтерÿ турĕ. Сталинград патĕнче фашистла нимĕç çарĕ вăйне сухатрĕ. Сталинград патĕнчи çапăçу хыççăн вăрçă мĕнле пырасси тĕпренех улшăнчĕ. пирĕн çар стратегиллĕ пуçарăва тăшман аллинчен туртса илчĕ. Сталинград патĕнчи çапăçу хыççăн нимĕçсем çĕмĕрен вăй илме пултараймарĕç.

Сталинград хыççăн Совет Çарĕ фашистла нимĕç çарĕсене Курск патĕнче çĕмĕрсе тăкса. малалла наступлени туса пычĕ. Курск патĕнчи çапăçу гитлерла Германие катастрофа умне тăратрĕ Совет Çарĕ пысăк фронтра хăватлă наступлени пуçласа, фашистсем оккупациленĕ совет территорийĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ирĕке кăларчĕ.

Совет Союзĕ тăшмана хирĕç пĕччен çапăçса, тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра çĕнтерÿ тума гитлерла Германи çарĕсене хытăрах та хăватлăрах пыра-пыра çапса хăйĕн союзлă обязательствисене тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынă вăхăтра, США-па Англири пуç пулса тăракан ушкăнсем, хăйсен интересĕсемшĕн кăна тăрăшса. гитлерла Германие хирĕç хĕçпăшалпа активлăн кĕрешес ĕçрен суттăнчăкла пăрăнса тăчĕç. Вĕсем Европăра иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртесрен ултавлă пăрăнчĕç. Иккĕмĕш фронт уçассине вăраха хăварса. вĕсем фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Совет Союзне вăйсăрлатма. вăрçă хыççăн пирĕн çĕршыва США-па Англие пăхăнса тăракан çĕршыв туса хума шутланă.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пиллĕкмĕш çул—Сталин юлташ ертсе пынипе фашистла çарсене вунă хутчен хăватлăн пырса çапнă çул—тăкăлă çĕнтерÿсен çулталăкĕ пулчĕ. Совет Çарĕн пысăк çитĕнĕвĕсем Совет Союзĕ хăйĕн вăйĕсемпех гитлерла çара çапса аркатма. Германие пăхăнăкнă Франципе тата Европăри ытти халăхсене фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларма пултарнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç. Ун хыççăн тин Американăпа Англири пуç пулса тăракан ушкăнсем. Хĕвеланăç Европăра пуç пулса тăрас тесе. хăйсен çарне Франци илсе пычĕç. Вăрçăн çак тапхăрĕнче те вĕсем фашистла çара пĕтĕмĕшпех çапса аркатасран сыхласа хăварма, ăна Европăри демократие хирĕç вăй туса хăварма пур майсемпе те тăрăшрĕç.

1945 çулхи май уйăхĕнче Совет Çарĕ, гитлерла çара çапса аркатса, вăрçа пĕтерчĕ, фашистла Германие тапăллă парăнтарчĕ. Çак историллĕ çĕнтерÿ хыççăн виçĕ уйăхран, пирĕн правительствăн союзлă обязательствисене пурнăçласа, Совет Çарĕ империалистла Японин тип çĕр çинче тĕп вăйĕсене хăватлăн пырса çапса, çĕмĕрсе тăкрĕ, çапла вара Японие те пĕр сăмахсăрах парăнтарчĕ.

Пирĕн халăх Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă çĕнтерĕвĕн пĕтĕм тĕнче историйĕнчи пĕлтерĕшĕ сакăнта пулать: империалистсен иккĕмĕш хут килсе тапăннине çирсе ярса, эпир советлă социализмлă строя—пĕтĕм тĕнчери прогресăн, мирĕн тата демократин тĕп тĕрекне сыхласа хăвартăмăр. Европăри халăхсене фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăлартăмăр. пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисене фашизм чуралăхне кĕрсе ÿкесрен çăлса хăвартăмăр. Совет Союзĕ фашистла агрессорсене çĕнтернине пула, Вăтаçĕр тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсем—Польша, Венгри, Чехословаки, Румыни, Болгари, Албани империализм системинчен тухса ÿкрĕç. Вăл çĕршывсенче халăх демократи йĕрки тунă. Совет Союзĕн пуян опычĕпе усă курса тата вăл пулăшса пынипе, çак çĕршывсем халĕ ăнăçлăн социализм патне пыраççĕ. Европа центрĕнче мире юратакан Демократиллă Германи Республики пулса тăчĕ.

Германипе Япони агрессорĕсене çĕмĕрсе тăкни Китай халăхне историллĕ çĕнтерÿ тума, Китай Халăх Республики туса хума май пачĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçăра пирĕн совет обществипе государство стройĕ çĕнтерчĕ, пирĕн хăватлă Хĕçпăшаллă Вăйсем çĕнтерчĕç. Çак пĕтĕм тĕнче историйĕнчи паллă çĕнтерĕвĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тунă. вăл фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă пĕтĕм халăх кĕрешĕвне хавхалантарса тата организацилесе пычĕ.

Совет Çарĕ тунă историллĕ çĕнтерÿсенче çĕнĕ сăпарлă çарăн уйрăмлăхĕсем. ăна вăй парса тăракан, ăна капитализмлă государствăсен çарĕсенчен маларах тăратакан уйрăмлăхсем уççăнах курăнчĕç. Гитлеризмпа Япони империализмĕн пусмăрĕнчен ирĕке тухнă çĕршывсенчи халăхсем хăйсене ирĕке кăларнă Совет Çарне чунтан-чĕререн юратса тав тăваççĕ.

Сталин юлташ гениллĕ ертсе пыни Совет Союзне Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтерÿ тума май пачĕ. Совет Хĕçпăшаллă Вăйĕсем тăшмана çĕнтерни вăл—сталинла полководец генийĕн çĕнтерĕвĕ.

* * *

Тăшмана хирĕç кĕрешсе пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерÿ туса. Совет Союзĕ. унăн çарĕпе флочĕ вăрçăран тата вăйларах та тĕреклĕрех пулса тухрĕç. Пирĕн халăх хавасланса мирлĕ ĕçе тытăнчĕ, коммунизм строительствинче вăл çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пырать.

Совет государстви пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçшăн çине тăрса кĕрешет. Совет Союзĕ мирпе демократин хăватлă лагерьне ертсе пырать. Пирĕн социализмлă государствăн сталинла тулашри политикине мĕнпур çĕршывсенчи миллионшар ырă шухăшлă çынсем кăмăллаççĕ, пирĕн Тăван çĕршыва вĕсем мир тĕрекĕ тесе шутлаççĕ.

Совет çыннисем. халăх хуçалăхĕпе культурăна малалла аталантарма пĕтĕм вăйне парса. хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсемшĕн. вĕсен çапăçас пултаруллăхне ÿстерессишĕн тăрăшаççĕ. Пирĕн халăхпа унăн вăйĕсем Сталин юлташ аслă асăрхаттарса каланине асра тытаççĕ: «Мирлĕ строительствăна вăйлатса пырса. пирĕн çĕнĕ вăрçă планĕсене хатĕрлекен тĕнчери реакцин усал ĕçĕсем çинчен те пĕр минут та манас пулмасть. Мирлĕ ĕçе курсан алан сыхă тăмалла. хамăр çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе оборона пултарулăхне куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла,—тесе аслă Ленин кăтартса панине асра тытас пулать» (ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен Министрĕ 1946 çулхи майăн 1-мĕшĕнче кăларнă 7-мĕш №-лĕ приказ).

Капиталистла государствăсенче нумай хĕçпăшал туса кăлараççĕ, çар бюджечĕ ÿссе пырать. Империалистсем мир çинчен тата мирлĕ пурнăçа юратни çинчен темле çуя сăмахсем каласан та США тĕнчере çĕнĕ вăрçа хатĕрленине халăхсенчен пытараймĕç. Тĕнчере пуç пулса тăма хапсăнакансем Гитлер çулĕпе пыраççĕ. Истори урокĕсем вĕсене ĕçе вĕрентеймерĕç. Америка империалисчĕсем. Корейăра хĕçпăшаллă интервенци пуçларĕç. Китайран Тайвань утравне туртса илчĕç. Вĕсем Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç вăрçа хатĕрленеççĕ.

Америка агрессорĕсем халăхсене атомлă бомбăпа хăратассшăн пулчĕç. атомлă хĕçпăшала хăйсем кăна тума пĕлетпĕр тесе шутларĕç. Анчах çĕнĕ вăрçă чĕртекенсен ку ĕçĕ те путланса ларчĕ.

«Совет Союзĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартма темиçе хут та ыйтнине, анчах Атлантика блокне кĕрекен державăсен каппиталчех çакна хирĕç пулнине пурте пĕлеççĕ,—тесе кăтартса пачĕ Сталин юлташ.—Çакă вăл, США пирĕн çĕршыва çине тапăнас пулсан, США-ри пуç пулса тăракан ушкăнсен атомлă бомбăпа усă курассине пĕлтерет. Шăпах çав сăлтав Совет Союзне атомлă хĕçпăшал тума хистерĕ, вăл пире агрессорсене хăйлă хĕçпăшалпа кĕтсе илме кирлĕ.

Паллах, агрессорсем Совет Союзĕ çине тапăнсан, вăл хĕçпăшалсăр иласине кĕтеççĕ. Анчах Совет Союзĕ çакăнпа килĕшмест, вăл агрессорсене хăйлă хĕçпăшалпа кĕтсе илме кирлĕ тесе шутлать».

Совет халăхĕ миршĕн çине тăрса кĕрешет. Анчах вăл империалистла çăткăнсем иккаятаичен хăрамасть. Берия юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарни çинчен тунă докладра çапла кăтартса пачĕ: тĕнчери çĕнĕ вăрçă мĕн патне илсе пырассинчен хăвăсен пирки калас пулсан, унтан чи малтан Американăри тата ытти буржуаллă çĕршывсенчи капиталистсен хăрамалла, мĕншĕн тесен çĕнĕ вăрçă халăхсем умне капитализм стройĕ çинчен кÿренсе строй, вăрçăсăр пурăнма пултараймен строй пулса тăни çинчен тата çак юнлă строя усăсăр социализмлă стройпа улăштарасси çинчен ыйту кăларса тăратĕ.

Совет халăхĕ, унăн паттăр воинĕсем Америка империалисчĕсен усал ĕçĕсене çивĕч асăрхаса тăраççĕ. Пирĕн халăха вăрçă кирлĕ мар. Вăл мирлĕ ĕçе юратать, коммунизм тăвать. Анчах Совет государстви мире юратнине унăн вăйсăрлăхĕ вырăнне шутлаканăн пысăк намăс курмалла пулĕ. «Моральпе паттăрлăх тĕлĕшĕнчен тĕнчере чи малта тăракан Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн пирĕн Тăван çĕршыв çине, историри паллă урокĕсене шута илмесĕр, каллех тапăнма хăякан кирек хăш тăшмана та татăклăнах çапса аркатма ку чухнехи пур йышши хĕçпăшал та çителĕклĕ»—терĕ Берия юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарни çинчен тунă докладра.

Хамăр социализмлă Тăван çĕршыв кун-çулĕшĕн ответлăха туйăн йăланса, совет воинĕсем хăйсен çар ăсталăхне куран-кун ÿстерсе, Совет Çарĕн дисциплинине—çапăçас пултарулăхăн никĕсне çирĕплетсе пыраççĕ. вĕсем совет халăхĕпе Ленин—Сталинăн аслă партийĕн шанчăкне малалла та тивĕçлĕ пулĕç.

Яков УХСАЙ
Чăваш АССР Халăх поэчĕ

Хăратаймĕç!

Мир салтакĕ агрессорсене питленĕ

1.

Тăват çулта февраль тăваттă.
Тăваттăшне те астума
Çуллен çулах тупа тăваттăм,
Шутлаттăм хут çине çырма.

Пĕри-тавра сип-сивĕ юрччĕ,
Тĕл-тĕл хураччĕ тĕтĕмпе.
Хĕл сиввинче салтакăн пурччĕ
Шинель, çăматă, ăш кĕпе.

Эпир, çĕр айĕнче арланăн
Вăртсан та, хамăр ĕмĕрте
Хĕвеллĕ кунсене ырлана,
Телей вылянă чĕрере.

Окопсене тăшман кăварĕ
Сунтарнă вăхăт ирте-ске,
Сурхи вăйпа шăтса хăпарĕ
Тăпра çинче кăвак çеçке.

Чугун пиншер-пиншер тĕпренчĕк
Шилĕнĕ хыççăн килĕнче
Салтакăн писмелле икерчĕ
Çавра чугун çатма çинче.

Тăват февраль. Çулпуç кăларнă
Приказ тăваттă—малалла
Кайма чĕнсе хастарлăх панă
Чĕремĕре, чуна, алла.

Эпир тапса сиксе пĕр каррăн
Çĕкленнĕ сивĕ хирсенче.
Пире утмă юр пулнă тарăн,
Тăхлан шилеĕ пуç çинче.

Вутра çунса февраль иртетчĕ
Тăват çулталăк хушшинче.
Асран каймн сурав пичечĕ
Салтакăн юлнă ÿтĕнче.

2.

Тăват çулталăк пынă ĕмĕт
Çитсе яврарĕ çуркунне.
Каппайчăкла пиирн кĕмсĕрт
Ухсе пытанчĕ кĕл айне.

Мухтавлă çĕнтерÿ парачĕ
Кĕрлерĕ чаплă сехетре,
Тăшман ялавĕсем гаптанчĕç
Çу кунĕ Хĕрлĕ Площадьре.

Калтасене ирсе таптарĕ
Совет салтакĕ йĕрĕнсе. —
Харампырсен вăрçин кăварĕ
Пĕтмен иккен çапах сÿнсе.

Вутпа вылясшăн самăр мистер
Ухçа яравĕ хÿттинче,
Вăрçа чĕнсе тагти-сыпписĕр
Палкать Париж керменĕнче.

Ăшу хыпать, чĕрÿ вăрканă.
Çиллÿ çунса вĕренĕрен
Ĕçме тивет, оратор, санăн
Умри шыва минутсерен.

Совет Союзĕ те, ытти те,
Китай та килĕшмест сана.
Вĕсем хитре! Шăмарнă питĕ,
Хускатнă эс хура юнна.

Суртсем пурин те пирĕн çутă—
Пире окопсене кĕртме
Сан, мистер, сук пали вăю та,
Чĕлхÿ те тăлланать темме.

Вăрçа ыхханакан телейлĕ
Миллионшар сасса пали
Юнавлă сассупа витеймĕн,
Пăвма аллу та халсăр сан!

Тăватă хут тăваттă—çиччĕ,—
Тесе ан суй! Эпир шута
Вĕреннĕ чух хирсем вĕриччĕ,
Услам пухма кĕмен вута.

Эпир таса чĕреллĕн, уççăн
Телей туянă çапăçса,
Юна тăкса пулман çутуçă,
Юна тăкса пухман укçа.

3.

Чĕлхен пур тепĕр «тар» сăмахĕ:
Чипер ĕçре кăларнă тар!
Сыв пултăр ĕç—тĕнче ахахĕ!
Сăвва кĕртер те янратăр!

Ĕçрен килсен пăхма иленчĕк
Совет çыннийĕн килĕнче.
Услам çура пиçе икерчĕ
Пиçет чугун çатма çинче.

Пăсран шăрагнă хÿхĕм кашăк
Выртать умра... Асту, паян
Пире пырса çапма сасартăк
Вăю çитеймĕ, мистер, сан!

Снаряд тума пур йăс та хурçă,
Туни те пур-тăп халлĕхе.
Ăна пĕлеймĕп эпĕ уççăн,
Пурне те каламасть чĕлхе.

Çĕршывăм сирĕнпе канашлă
Пулса тăрасшăн—ун çине
Эсир сасартăк пăрахасшăн
Хăруш атом бомбине.

Пирте кун пек тетте—пĕлсе тăр—
Çитмелĕх пулĕ. çавăнпа
Пăхатăп сан çине, оратор,
Çиллес кăварлă куçăмпа.

Хăвна нумай укçаллă турă
Тесе шутлатăн çĕр çинче.
Темлĕ тискер лаборатори
Туса тултарнă штатсенче.

Çынна екки ярса кайналăх
Илемлĕ пултăрччĕ тĕнче!—
Тесе хăватлă пирĕн халăх
Вăрман лартать уй-хирсенче.

Эс, самăр мистер, пăрахаймăн
Кунта нимле те инкеке,
Хура çиллÿ вĕренĕ майăн
Палка та сивĕ шыв лĕркке!

Тăван çĕршывăн вăйĕ-халĕ
Ĕçре вĕрет—хуралăр мар.
Хураллаcа тăрать, хураллĕ
Сиртен пин хут Хăватлă Çар.

Епле пуян те, тутлă çарăк
Вăрлас текен пек, ун çине
Пăхма пăрах—Тĕреклĕ Çарăн
Чапне аету, асту вăйне!

Досааф организацийĕн ĕçĕнчи çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн

Совет çыннисем Досааф ретĕнче тăрса, производствăран уйрăлмасăр çар ĕçне вĕренеççĕ, тĕл перекен, пулеметчик, радист, планерист, парашютист, рулевой, сигнальщик, моторист, мотоциклист, шофер специальноçĕсене туянаççĕ.

Сăмахран, Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри Ильин юлташ ертсе пыракан пуçламăш организацине илер. Кунта общество членĕсем хушшинче çар ĕçне вĕренессине лайăх йĕркеленĕ. Организацире тăтăшах пăшалтан тĕл перес, йĕлтĕрпе ярăнас тĕлĕшпе тата ытти енĕпе те ăмăртусем пулса иртеççĕ. Виçĕ обществăна пĕрлештернĕренпе организаци йышĕ икĕ хут ытла ÿсрĕ.

Досааф организацийĕсем колхозсенче те йышланса пыраççĕ. Елчĕк районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозри Досааф организацине Н. Доброхотов юлташ ертсе пырать. Колхозра шоферсен, мотоциклистсен курсĕсем, тĕл перекенсен, ПВХО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть тĕл перессине ирттернĕ ăмăртусенче 35 çын разрядри норăмĕсене тултарнă. Пуçламăш организацин хăйĕн мотоциклет, пĕчĕк калибрлă винтовкăсем тата çар ĕçне вĕренмелли ытти хатĕрсем те пур Организацин 45 маштар йĕлтĕр шутланать.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Коммунизм» колхозри Досааф организацийĕ те лайăх ĕçлет. Кунта радистсен. тĕл перекенсен, ПВХО ĕçне вĕренекенсен кружокĕсене йĕркеленĕ, автомобильпе çÿреме вĕренекенсен кружокĕ те лайăх ĕçлет. Радиокружок членĕсем вăйĕпе 51 детекторлă приемник, 5 лампăллă приемник туса хатĕрленĕ. Радио ĕçне юратакан Г. Трофимов юлташ ертсе пынипе радиоузел тунă, 24 колхозник килне радио кĕртнĕ. Çарпа техника ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе каласусем нумай ирттереççĕ. Шкул директорĕ Степанов юлташ ертсе пыракан лекторсен групни 20 çынна пĕрлештерсе тăрать. Вĕсем юлашки вăхăтра тĕрлĕ темăсем тăрăх 50 лекци ирттернĕ. Общество членĕсем тăрăшнипе çар кабинетне лайăх йĕркеленĕ. «Патриот Родины» хаçата витринăна вăхăтра хурса пыраççĕ.

Канаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан, «Канаш», «Мотор» колхозсенчи Досааф организацийĕсен членĕсем, радио ĕçне кружоксенче вĕренсе, ĕçсыннисен килне радио кĕртме пулăшаççĕ. «Канаш» колхозри Струхов юлташ ертсе пыракан Досааф организацийĕнче детекторлă приемниксем—105, лампăллă приемниксем—11 туса хатĕрленĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводра, администраци пулăшнипе, планер, мотоцикл, нумай кĕнекесем туяннă Досааф класĕпе кĕтесĕсене йĕркеленĕ. Çавна пула та ĕнтĕ общество членĕсем кружоксенче массăллăн вĕренеççĕ.

Общество тунăранпа Досааф организацийĕсемпе комитечĕсем çарпа техника вĕренĕвне пропагандăлас енĕçе те чылай опыт туянчĕç. Малта пыракансен опытне анлă сармалла.

Общество ретне çĕнĕ членсем илесси Досааф организацийĕсемпе комитетсем активлă ĕçленинчен килет. Çар пĕлĕвĕсене пропагандăлас ĕçе лайăх йĕркеленĕ районсенче организацисем çĕнĕ членсемпе хутшăнсах пыраççĕ.

Анчах общество ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе Çĕмĕрле, Пăрачкав, Çĕрпÿ районĕсем юлса пыраççĕ. Çĕмĕрле районĕнче Досааф организацийĕсем 30 колхозран 6-шĕнче çеç тунă.

Иртнĕ çулта виçĕ обществăна пĕр обществăна пĕрлештерни ĕçе лайăхлатма пулăшрĕ. Досааф комитечĕсенче ĕçлеме активлă çынсене суйланă. Вĕсем Досааф организацийĕсем умне лартнă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес пулать. Досааф организацийĕсен актив çине таянса ĕçлемелле, вĕсемпе канашламалла.

Паян, совет халăхĕн аслă уявĕн кунĕ, Досааф членĕсем Тăван çĕршывăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене тата ытларах тĕреклетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хатĕрри çинчен калаççĕ.

П. ТРОФИМОВ,
Республикăри Досааф оргкомитечĕн председателĕ.

СОВЕТ ÇЫННИСЕМ МИРЛĔ ĔÇРЕ

„Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хӳтĕлесен, мир сыхланса юлĕ тата тĕрекленĕ“ (И. В. СТАЛИН).

Канашри вагонсем юсакан заводра.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Главнăй механика пайĕнчи аслă инженер Г. В. Жарко юлташ фронтовиксен бригадине задани парать.

(Сулахайран сылтăмалла): Г. В. Жарко юлташ, слесарьсен бригадирĕ М. П. Тулаев юлташ, Совет Союзĕн Геройĕ И. А. Кабалин юлташ тата слесарь В. Ф. Воронин юлташ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоукерчĕкĕ.

Вĕсене аслă Сталин тав тунă

1944 çул. Пирĕн Хĕрлĕ Çар, чаплă полководец Иосиф Виссарионович Сталин генилле ертсе пынипе, Тăван çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатса пырать. Фронтри чаплă çĕнтерӳсем тылри рабочисемпе колхозлă ял хресченĕсене тата тăрăшарах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Пĕтĕм çĕршыв тăшмана хăвăртрах çапса аркатассишĕн, çĕнтерӳ кунне çывхартассишĕн ырми-канми ĕçлет.

Çак вăхăтра республикăри колхозсенче Хĕрлĕ Çар валли çар техники туянма укçа пухса парас тĕлĕшпе патриотла пахa ĕç аллă сарăлать. Чылай колхозниксем танксемпе самолетсем тума 100-шер пин тенкĕ укçа пампаççĕ.

Патриотла çак паха пуçару Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозра аллă сарăлать.

Вăл вăхăтра колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ П. Майков тата фермăсен заведующийĕ С. Соловьев юлташсем хăйсем перекетленĕ укçана 100 пин тенкĕ боевой самолет тума хываççĕ, государствăна 190 пăт тырă сутаççĕ, государствăн виççĕмĕш вăрçă заемне 17 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине сийĕнчех тӳлеççĕ. Çавăн çинчен вĕсем Сталин юлташа çырса пĕлтереççĕ.

«Эпир Сирĕнтен, юратнă учителĕмĕр Сталин юлташ, пирĕн укçапа тунă боевой самолета Совет Союзĕн геройне пирĕн земляка Ф. Н. Орлов капитана пама ирĕк ыйтатпăр. Пирĕн пирĕн Эсир ертсе пынипе эпир халĕ фашистла варварсенчен хăтарас тĕлĕшпе историллĕ тивĕçе пурнăçа кăртекен Хĕрлĕ Çара пулăшма панă парне пултăр»,—тесе çырнă вĕсем.

Аслă çулпуç И. В. Сталин юлташ колхозниксен патриотла ĕçне пысăка хурса хаклать. Часах вĕсем патне И. В. Сталинран телеграмма килет.

«Эсир, Майков тата Соловьев юлташсем, Хĕрлĕ Çарăн сывлăхĕ вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн Манран салам тата Хĕрлĕ Çар тав тунине йышăнăр.

Эсир ыйтни пурнăça кĕрĕ»,

тесе çырнă И. В. Сталин юлташ.

— Çак телеграммăна илнĕ куна эпир пурнăçра та манас çук,—тет С. Соловьев юлташ.—Вăл кун пирĕншĕн чи телейлĕ кун пулчĕ. Çав кунах тата И. В. Сталина «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăламалла туни çинчен пĕлтерчĕç. Пуринпе те пысăк савăнăç. Эпир тата тăрăшарах ĕçлеме тытăнтăмăр.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, эпир панă укçапа тунă самолетпа капитан Ф. Орлов пирĕн колхоза вĕçсе килчĕ. Эпир хамăрăн боевой самолета пăхса савăнтăмăр, самолет экипажне тăшмана хастарла çапăçма, çĕнтерӳ кунне çывхартма ыйтрăмăр. Пирĕн самолет кунтан тӳрех фронта тухса кайрĕ.

Колхозра фронт валли боевой техника туянма укçа-тенкĕ, тырпул нумай паракансем, аслă Сталин тав туса янă телеграммăсем илме тивĕçлĕ пулнă колхозниксемпе колхозницăсем татах та пулнă.

Колхоз бригадирĕ пулса ĕçленĕ Е. Смелов юлташпа колхоз счетоводĕ пулнă В. Волков юлташ самолет тума 50-шар пин тенкĕ укçа панă. Фронтовик арăмĕ, пилĕк ача амăшĕ, ĕне ферминче пăру пăхакан орденоносец К. Григорьева юлташ çапăçу техники тума 12.000 тенкĕ панă.

Пурте вĕсем аслă çулпуçран Иосиф Виссарионович Сталинран саламласа тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав туса янă телеграммăсем илме тивĕçлĕ пулнă.

Унтанпа темиçе çул иртрĕ. Апла пулин те çав хаклă телеграммăсем, çулпуç калама ăшă сăмахсем халĕ те чĕререн тухмаççĕ, вĕсене халĕ те лайăх ĕçлеме хавхалантараççĕ.

С. Соловьев юлташ çемйи колхозра чи ĕçчен çемьесенчен пĕри. Иртнĕ çулта вĕсем 1.098 ĕçкунĕ тунă, ĕçкунĕсем тăрăх тырпул, укçа-тенкĕ нумай илнĕ. Унăн ачисем пурте вĕренеççĕ, асли ывăлĕсем— Феодосий сыхăну техникумĕ, Зосим— энерготехникум пĕтерсе тухнă. Вĕсем иккĕшĕ те ĕçре.

Волков юлташ уй-хир бригадирĕ пулса ĕçлет. Районта чи лайăх бригадирсенчен пĕри вăл. Пĕлтĕр кашни гектартан вăтам шутпа 26-шар центнер ыраш туса илнĕ. Ксения Григорьева колхозра ырми-канми ĕçлекен колхозница.

Партипе правительство куллен пулăшса пынипе, колхозниксем хăйсен колхозне вăйлатассишĕн, Тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне ӳстерессишĕн куллен тăрăшса ĕçленипе «Красное Сормово» колхоз республикăра малта пыракан колхозсен ретне тăчĕ, унăн колхозникĕсем пуян та культурăллă пурăнакан пулчĕç.

— Фашистла ирсĕр тăшмана çапса аркатассишĕн эпир нимĕн те хĕрхенмерĕмĕр. Халĕ мирлĕ ĕçре Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн, коммунизмăн аслă стройкисене хăвăртрах туса çитерессишĕн ырми-канми ĕçлетпĕр. Анчах эпир Америкăпа Англи тата вĕсем майлă тăракан капитализмлă çĕршывсенчи империалистсен ирсĕр шухăшĕсене лайăх ăнланатпăр. Эпир тĕнчере çĕнĕ вăрçă чĕртме халăх юнне юхтарма памăпăр, хамăрăн Тăван çĕршыва сыхлама пĕлĕпĕр,—теççĕ вĕсем.

И. СМЕЛОВ,
ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ.

Малта пыраканосем

(Запасри офицер, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ А. Ф. Доманин юлташ каласа пани)

Эпир, фронтовик пулнăскерсем, мирлĕ пурнăçшăн ĕçлесе пĕр минутлăха та Тăван Совет Çарĕ çинчен манмастпăр.

Пирĕн колхозра Совет Çарĕнчен килнĕ çынсем уй-хир ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, строительство бригадисенче ĕçлеççĕ. Ăçта ĕçлесен те вĕсем хăйсен хастарлăхне кăтартаççĕ, ĕçе тĕплĕ, вăхăтра тăваççĕ.

Колхозра пĕр тăван Александрпа Василий Ашанинсем çинчен ăшă кăмăлпа асăнаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те—колхоз бригадирĕсем. Вĕсем ертсе пыракан бригадăсем çулсерен пысăк тухăçлă тырпул пухса кĕртеççĕ. Бригадирсен пархатарлă ĕçне правительство тивĕçлипе хакларĕ: вĕсен кăкăрĕсем çинче виçшер Ленин орденĕ йăлкăшать. Вĕсене Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне панă. Ку хисеплĕ ята çавăн пекех вăйлă тырпул мастерĕсем — фронтовиксем пулнă И. С. Саканина, П. П. Пупина, Н. Я. Михейкина, П. Т. Пронькин юлташсем те илнĕ.

Демобилизаципе таврăннă салтаксене— выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен М. Е. Ерошин, Р. Д. Милицков, П. Д. Пупин юлташсене, Ф. П. Якимов, П. Н. Доманин, И. И. Храмкин трактористсене иккшер-виçшер орден парса наградăланă.

Социализмлă Ĕç Геройĕ А. Д. Ашанин юлташ ертсе пыракан пĕрремĕш бригада январь уйăхĕнче хире 3.200 лав тислĕк кăларчĕ. Ытти бригадăсем те унтан кая юлмаççĕ.

Старшина пулнă М. П. Якимов, колхозри хастарлă ĕçшĕн Ленин орденĕ илнĕскер, вăрлăх тасатнă çĕрте ĕçлет. Февралĕн 7-мĕшĕ тĕлне вăл вăрлăхсене иккĕмĕш хут сортласа пĕтерчĕ.

Колхоз тимĕрçисем Д. М. Васнин, Н. С. Суров тата Д. С. Кузнецов юлташсем ялхуçалăх машинисемпе ытти инвентаре срокчен юсаса пĕтерчĕç.

Мухтав орденĕсен кавалерĕ

Родимцев генерал ертсе пыракан гвардеецсен паттăрлăхĕ çинчен халĕ эпир кинора та куратпăр, кĕнекесенче те вулатпăр. Мухтав орденĕсен кавалерĕ, пирĕн паттăр земляк А. П. Табаков юлташ çав дивизире минометчик пулнă. Паян, Совет Çарĕ 34 çул тултарнă кун, унăн вăрçăри пурнăçĕпе ĕçĕсене тепĕр хут асăнас килет.

Вăрçăччен Александр Порфирьевич тĕнчери чи мирлĕ профессие вĕреннĕ—шкулти учитель пулма хатĕрленнĕ. Тăван çĕршыва хаяр тăшман тапăнсан, мирлĕ совет çыннисем тĕнчери чи хастарлă салтаксем, никам парăнтарайми, никам çĕнейми улăпсем пулса тăчĕç. Çавăн пекех Табаков та Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ, мирлĕ профессирен уйрăлса, чи ăста çар çынни пулса тăрать. Сталинградри çапăçăва вăл 1941-мĕш çулхи сентябрь уйăхĕнче—Гитлер çарĕ трактор завочĕпе «Красный Октябрь» завод хушшинчен Атăл хĕррине тухассишĕн кунсерен çĕнĕрен те çĕнĕ атакăсем тунă вăхăтра кĕнĕ.

Ун чухнехи хăвалă çапăçу пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕ. Гитлерла Германи Сталинград патне Румынирен, Италирен, Венгрирен çĕнĕ дивизисем илсе-илсе килнĕ, Болгарие вăрçа хутшăнма хистенĕ. Япони императорне Хĕвелтухăçĕнчен Совет çĕршывне тапăнма васкатнă. Апла пулин те совет çыннисем Сталин хулине тăшмана памарĕç. Гитлер çарне çаврăнса илсе аркатса тăкрĕç.

Александр Порфирьевич совет халăхĕ хаяр тăшмана çĕнтерессине пĕтĕм чунтан-чĕререн ĕненнĕ. Сталинград урамĕсенчи çапăçура вăл хăй те улăп пек çирĕп тăнă, хăйне амантсан та çапăçу хирĕнчен тухасшăн пулман.

Сталинградри çĕнтерӳ хыççăн Табаков юлташ кăнтăрти фронта лекет, артиллерие куçать, Перекопри операцире пулать, тăшман алливчи Севастополь хулине ирĕке кăларнă çĕрте çапăçать. Çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн ăна икĕ хутчен «За отвагу» медаль параççĕ.

1944-мĕш çулхине гварди старшина А. П. Табаков пĕрремĕш Прибалтийски фронтра—Литвăра пулать. Унта часах наступлени пуçланать. Полк артиллерийĕнчи наводчик Тильзит гарнизонĕпе парăнтарнă çĕрте çапăçать. Кунта Табаков 5 пулеметпа тата пĕр минометпа персе тăракан тăшман расчечĕсене путарса лартнăшăн виççĕмĕш степеньри «Мухтав орденне» парса наградăлаççĕ.

Хĕрĕх пиллĕкмĕш çулхи апрель уйăхĕнче Совет Çарĕсем Кенигсберга—тăшманăн Балти тинĕсĕ хĕррипчи питаделĕне парăнтараççĕ. Гвардеец Табаков çак çапăçура икĕ хутчен чапа тухать. Пĕррехинче вăл çĕрле тăшман траншейне кайса тыткăна илнĕ гитлеровецă йăтса килет: наступлени умĕнхи тапхăрта калама çук хаклă сведенисем панă салтака тытнăшăн ăна иккĕмĕш степеньри «Мухтав орденне» параççĕ. Ун хыççăн вăл тата тепĕр ĕç тăвать. Батарея командирĕ Табакова тăшман алливчи пысăк çурта вăртăн кайса тăшмансем ăçта пуррине пĕлтерсе тăма—корректировка тума задани парать. Табаков хăйĕн юлташĕпе тăшман тылне каять те чул çуртăн тăваттăмĕш хутне хăпарать. Аялта шавлама илтĕвет. Табаков сиккĕнчех подвала анса пăхать: унта салтаксемпе офицерсем нимĕçле калаçни илтĕвет. Табаков юлташпе автоматпа пеме хатĕрленсе тăна хушать, хăй подвал алăкне уçса граната пăрахать те команда парать: «Аллăрсене çĕклесе пĕрерĕн тухăр!»—тет. Хĕрĕх икĕ гитлеровец (вĕсем хушшинче 4 офицер пулнă) пăшалĕсене пăрахса икĕ совет салтакне тыткăна парăнаççĕ. Çак ĕçшĕн А. П. Табакова пĕрремĕш степеньри «Мухтав орденне» памалла тăваççĕ.

Вăрçă хыççăн гварди старшина А. П. Табаков Мускавра Çĕнтерӳсен парадĕнче пулать, аслă Сталина курать. Кремльте Михаил Иванович Калинин аллинчен чаплă награда илет.

Халĕ Александр Порфирьевич Табаков Чкаловски районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ, колхозниксене тухăçлă тырпулшăн кĕрешме вĕрентсе, ертсе пыракан командир. Ку колхоз пĕлтĕр Аслă Патăрьелĕнчи тата икĕ колхозпа пĕрлешрĕ. Пĕрлешнĕ хыççăн колхоз хăварт аталанса пырĕ. Кашни гектартан ыраш 100-шер пăт, уйрăм бригадăсенче 130-шар пăт пуçтарса кĕнĕ. Çĕлĕпе куратул тухăçлăхĕ те ӳснĕ.

Колхозăн хуçалăхĕ пысăк: акмалли çĕр лаптăкĕ икĕ пин гектар ытла.

«Большевик» колхозра иртнĕ çулталăк хушшинче çĕнĕ стройкăсем нумай тунă. Кăçал тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешнипе пĕрлех выльăх-чĕрлĕхсем шутне ӳстермелле, унăн тухăçлăхне ӳстермелле, строительство ĕçне тата анлăрах туса пымалла. Кашни килĕ электричество кĕртме, выльăх фермисенчи йывăр ĕçсене механизацилеме, правлени çуртĕпе клуб, çĕнĕрен ĕне ферми, тимĕрç лаççи тума палăртнă.

А. ТАЛВИР.

Пирĕн Çар

Кĕрешсе ирĕке çуралчĕ —
Совет Çарĕ — хурçă çар,
Гоçыннисене хăтарчĕ
Пусмăртан кĕрӳ вутра.

Пирĕн çар сыхлать мухтавлăн
Аслă халăх телейне.
Вăл татать усал тăшманăн
Сĕмсĕр, ирсĕр ĕмĕтне.

Аслă полководец Сталин,
Мĕнпур халта-çĕлене
Çĕнтермешкĕн халаларĕ
Паттăр ывăлĕсене.

Тĕнчипех чап илчĕ пирĕн
Совет Çарĕ—аслă çар.
Çирĕппĕн тăрать вăл миршĕн,
Çул памасть хаяр вăрçа.

Г. ЛИСИН.

Çартан килнĕ çыру

Дневальнăй вăхăт пăхса илчĕ те апатă хатĕрлеме команда пачĕ. Казармăра шăп. Старшина наряд пĕлтернĕ хыççăн, строй умне командир пырса тăчĕ. Вичкĕн куçĕсемпе кашни салтака тимлĕн пăхса тухрĕ. Вăл кĕçĕн сержанта А. Филимонов юлташа стройран тухма команда пачĕ. Строй умне çирĕп пӳллĕ çамрăк тухса тăчĕ.

— Çар техникине вĕренес тĕлĕшпе лайăх тĕслĕх кăтартнăшăн командовани тав тунине пĕлтеретĕп.

— Служу Советскому Союзу!—ответлерĕ Филимонов юлташ.

Комсомолец кĕçĕн сержант Филимонов воинсем хушшинче пысăк хисепре. Вăл çар присягине тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырать, Совет Çарĕн воинне шанса панă техникăна юратса пăхса усрать.

Кĕçĕн командир пулса вăл хăйĕн юлташĕсене те вĕренӳре мала тухма нумай пулăшать. Акальтен мар ăна часть командирĕ вуникĕ хутчен тав тунă.

А. Филимонов юлташ пирĕн республикăри Советски районĕнчи Шемшеш ялĕнче çуралнă.

А. ДАНИЛОВ.

Фронтовиксен бригади

Тулаев бригадинчи слесарьсем паян та, яланхи пекех, цеха ыттисенчен иртерех çитрĕç. Малтан вĕсем кунĕпе ĕçлеме кирлĕ инструментсене хатĕрлĕсе хучĕç, тĕрĕслерĕç. Гудок ĕçе тытăнма йыхăриччен вунă минут малтан пĕр çĕре пухăнса ĕнер илнĕ наряда мĕнле пурнăçласси çинчен канашлама пуçларĕç.

— Салам фронтовиксен бригадине!—саламларĕ цехри парти организацин секретарĕ инженер Жарко сĕтел хушшинче чертеж çине тинкерсе пăхса ларакан слесарьсене.

— Салам, салам!—слесарьсем Жарко юлташа сĕтел хушшине ларма вырăн пачĕç.

Вăл пĕр самант чертеж çине пăхса тăчĕ. Вара, урипе тепĕр пукана туртса илсе, вĕсене хирĕç ларчĕ.

— Тимĕрç цехĕнчи ĕçе пĕтертĕр-и?—ыйтрĕ вăл вырнаçса ларсан.

Нумай пулмасть тимĕрç цехĕнче пăс вăйĕпе ĕçлекен мăлатук пăсăлнă. Вăл мăлатук пĕр тоннăллă, сунтал айĕнчи пукан унтан та йывăртарах—çирĕм тонна ытла таять. Çав пуканăн сунтала вырнаçтарса лартмалли йăви каталнă пирки ĕçлеме чарăннă ĕнтĕ мăлатук.

Сунтал пукане вырăнтах шăратса тума çук. Çав тĕрлĕ йывăр япалана ремонтно-механически цеха куçарса кайса юсама та май килмен. Çапла ĕнтĕ, ăна заводра юсасси çинчен сăмах та пулма пултарайман. Пурте Канашран пилĕк пин километрти завода çĕнĕ пукан тума заказ парасси çинчен шухăшланă.

Анчах вăхăт темрен те хаклă. Инçетри заводра çĕнĕ пукан туса парасса кĕтес пулсан, вагонсене пĕр-пĕринчен кăвармалли çекĕлсем тăвакан йывăр мăлатука икĕ уйăх ытла пушă лартмалла. Мăлатук пушă ларсан, çекĕлсем çук пирки, вагонсене юсаса кăларас ĕç чарăнса тăма пултарать.

Жарко юлташ цехри рабочисен пултарулăхне шанать. Çавăнпа вăл Тулаев коммунист бригадинчи слесарьсемпе каласа пăхма шутланă.

— Сирĕн бригадăри тăватă çынран виççĕшĕ коммунист. Парти организаци сире сунтал пукане юсаса завода йывăрлăхран кăларма чĕнет,—тенĕ вăл.

Бригадăри слесарьсем пурте йывăр мăлатук патне кайса пăхнă. Вара хăйсен шухăшне пĕлтернĕ. Пукана вырăнтах юсама пуррине пĕлсен, завод директорĕ ăна çирĕм утă ĕçкунĕнче тӳрлетсе хута яма хушнă. Бригадăри çынсем кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек цехран тухмасăр, вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме тытăннă. Вунултă кунран вĕсем пукана каталнă таран касса тикĕслесе сунтала вырнаçтарса лартма çĕнĕ йăва чавнă тата мăлатука тĕпренех юсаса пĕтернĕ. Çавăн çинчен ыйтрĕ ĕнтĕ Жарко юлташ слесарьсенчен.

— Мăлатука çĕрле хута яраса патăмăр,—алливчи çап-сутă циркульне сĕтел çине хунă хушăра ура çине тăчĕ Тулаев.—Ĕнер акă буферпа рессор айне хуракан пружинăна авмалли станока юсама наряд пачĕç.

— Пĕлетĕп. Çавăн пирки килтĕм те эпĕ сирĕн патăра,—терĕ Жарко, ура çине тăрса.—Ку станока тата хăвăртрах юсама тивет.

— Кунта, наряд çинче, тăхăр кунра юсаса пĕтерме кăтартнă...—сăмах хушрĕ Тулаевпа юнашар ларакан Виктор Скоробов.

— Эсĕ тĕрĕс калатăн. Унта, чăнах та, тăхăр кунта юсаса пĕтермелле тенĕ. Анчах заводăн авса хунă лапас пружинăсем виçĕ куна кăйа çитеççĕ. Вĕсем пĕтсен, урапасен цехĕнче ĕç чарăнса тăма пултарать.

— Апла эсĕ пире станока виçĕ кунта юсаса пĕтерме сĕнесшĕн!—Жарко шухăшне тавçăрса илчĕç В. Воронинпа И. Кабалин коммунистсем.

— Тĕрĕс калатăр.

Пурте хăйсен ăшĕнчи сасса итленĕ пек, шăпланчĕç.

...1943-мĕш çул. Пирĕн наступлени туса пыракан часть Днепр хĕррине тухрĕ,—вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçа аса илчĕ Совет Союзĕн Геройĕ Иван Андреевич Кабалин.—Вăл вăхăтра взвод командирĕн помощникĕччĕ эпĕ. Пирĕн полк ун чухне хамăрăн тĕп вăйсенчен чылай малта пырать. Çавăх полк командирĕ тĕп вăйсем килессе кĕтсе тăмарĕ, Çĕр çирĕм çын уйăрса Днепр урлă каçса плацдарм йышăнмалли группа турĕ. Пирĕн каçмалли хатĕрсемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Анчах, моторлă кимĕсем илсе килессе кĕтсен, тăшман хăйĕн оборонине çĕнĕ вăйсем ярса çирĕплетме пултарать.

Малтанхинче Днепрăн икĕ енче те хăва ӳсекен вырăнра каçма шутларăмăр. Анчах ăнăçлă пулмарĕ. Хăвалăхран тухса шыва кĕрсенех, фашистсем пĕлĕт тулли ракета çакса тултарчĕç, çутатакан пульăпа пулеметран çунтарма пуçларĕç. Инçта кайса кĕме çук. Ирĕксĕрех хăвалăха кĕрсе кăнгăрла чавса хатĕрленĕ окопра пытанмалла пулчĕ.

— Каçаймарăмăр,—терĕмĕр каялла таврăнсан полк командирне. Хамăр, вырăнсăр ĕç туса айăпа кĕнĕ çын пек, унăн куçĕнчен пăхма вăтанатпăр.

— Куратăп,—тет вăл пире шанăçне çухатман сассипе.—Ырăн ăслăрах пулăпăр. Хăвалăхра пытанса шыв урлă каçма хатĕрленме аван. Çавăнпа тăшман эпир хăвалăхран каçасса кĕтсе тăнă.

Тепĕрмнче Днепрăн икĕ енче те хăва ӳсмен вырăнта каçма шутларăмăр. Фашистсем, чăнах та, эпир ку вырăнтан каçасса кĕтмен иĕн. Днепрăн тепĕр хĕррине çитсен тин эпир каçнине сисрĕç. Сыраннран çĕр метр пек иясан кимĕ хăйăр çине ларчĕ. Кунта çитнĕскер, каялла таврăнма çук ĕнтĕ. Эпĕ хамăн салтаксене шыва сикме хушрăм. Вĕсем, тăшман вут-хĕм тăкнине пăхмасăрах, миномечĕсене илсе пилĕк таран шыв тăрăх шыв хĕррипелле утрĕç. Типĕ çĕре тухсанах тăшмана минометпа пеме пуçларăмăр. Минометран пени салтаксене хавхалантарчĕ пулас. Вĕсем пурте пĕр харăс сиксе тăрса атака турĕç, тăшман траншейне туртса илчĕç.

Ирхине ирех пире тăшманăн пĕр батальонĕ атакăларĕ. Анчах эпир, каялла чакас вырăнне, фашистсене хĕсе плацдарма анлăлатрăмăр. Каç кӳлĕм батальон мар, полк атакăларĕ. Пилĕ йывăр пулчĕ ун чухне. Нумайăшĕ пуçне хучĕç. Хăшпĕрисем каялла та чакса пăхрĕç. Çавăх та, сырма хĕррине лартнă минометсем пĕр харăс персе тăрса тăшман сулне картласа хунă хыççăн, каялла таврăнса малтанхи позицие йышăнчĕç.

Малтанхи кунри çапăçура эпĕ минометпа тăшманăн виçĕ пулеметне, икĕ туппине пĕтертĕм, вуçĕр ытла салтакĕпе офицерне вĕлертĕм.

Тĕттĕм пулсан пирĕн патăмăра моторлă кимĕсем илсе килчĕç. Вĕсем хыçалтан темиçешер кимĕ кăкарса çĕрĕпе çынсемпе хĕçпăшалсем каçарчĕç. Понтон кимĕсемпе вăхăтлăх кĕпер турĕç. Ирхинеччен пирĕн вăй нумай хутшăнчĕ. Эпир çĕрĕпех тăшман çине систермесĕр тапăна-тапăна плацдарма анлăлатса пытăмăр.

Тепĕр кунне тăшман пире аллă ытла танкпа атакăларĕ. Ирхи куна каçчен самолетсем киле-киле бомба пăрахрĕç. Çавах вырăнтан тапратаймарĕç.

Виççĕмĕш кунĕнче, тупăсемпе танксем каçнă хыççăн, тăшманран хӳтĕленес вырăнне хамăр тапăнма пуçларăмăр. Каçчен ăна Днепр хĕрринчен виçĕ километр аякарах хăваласа кайрăмăр.

— Çапла эпир çĕрçирĕммĕн, вилĕмрен хăрамасăр Днепр урлă каçса, фронт валли плацдарм туса патăмăр... Сирĕн кăкăрăр çинче те орденсем çиçсе тăраççĕ. Эсир пурте фронтра паттăр çапăçнă çынсем. Фашистсене аркатма пултарнине, мирлĕ ĕçре пружина авакан станока виçĕ кунра юсаса пама пултараймастпăр-и?—каласнă вăхăтра Кабалин хăйĕн юлташĕсем çине пăхса илчĕ.—Пултаратпăр! Эсир слесарь ĕçĕсене тăвăр. Эпĕ токарь тумалли япаласене вăхăтра хатĕрлесе парăп.

Герой сăмахне итленĕ хушăра пурин те кăмăлĕ уçăлса кайрĕ, вăй хутшăннă пек туйăнчĕ.

— Георгий Васильевич,—терĕ ура çинче итлесе тăнă Тулаев Жарко юлташа.—Урапа цехĕнчи юлташсене фронтовиксен бригади пружина авакан станока виçĕ кунра юсаса пĕтерме обязательство илни çинчен пĕлтерме пултаратăр... Виктор Петрович Скоробов юлташ, парти ретĕнче тăмасть пулсан та, пирĕн çынна. Вăл пирĕнтен юлас çук.

— Акă ĕнтĕ, епле сирĕнтен юлас. Заводри ĕçе чарса тăма юрамасть. Тем пулсан та виçĕ кунра юсаса пĕтеретпĕр,—хăй малтан каланă сăмахран вăтаннă пек пулчĕ Скоробов.

Тулаев бригадинчи юлташсем мирлĕ ĕçре те, фронтри пекех, кашни кун хăйсен паттăрлăхне кăтартаççĕ. Иртнĕ çулхи декабрьте вагонсене çĕклекен кран чарăнса ларнă. Вăл крана фронтовиксем хĕрĕх пилĕк кун юсас вырăнне çирĕм кунра тӳрлетсе пĕтернĕ.

Тĕрлĕрен оборудованисемпе станоксене вĕсем ĕçе тĕрĕс организацилеппе хăвăртрах юсаççĕ. Ыттисем станок юсамалла пулсан унăн пайĕсене пурне те цеха леçсе параççĕ. Тулаев юлташ бригадинчисем çитес вăхăтра хăшĕ кирлĕ пулать, çавна черетпе леçсе параççĕ. Çавăнпа та Кабалин юлташ вĕсене çийĕнчех токарнăй станок çинче çĕнĕрен туса е киввисене япатса пама пултарать.

Тулаев, Кабалин, Воронин юлташсем вăрçăччен те кунта ĕçленĕ. Фронтран таврăнсан та вагонсем юсакан заводах ĕçе кĕнĕ. Вĕсем хăйсен ăсталăхĕпе ĕç тухăçне çулран çул ӳстерсе пыраççĕ. Январьте нормăна Тулаев—260 процент, Воронин—245 процент, Скоробов—216 процент, Кабалин—181 процент тултарса цехра малти вырăна йышăнма тивĕçлĕ пулнă.

Фронтовиксем производствăра малтисен ретре пынипе пĕрлех, общественлă ĕçе те активлă хутшăнаççĕ. Тулаев юлташ цехри парти организаци секретарĕн заместителĕ. Воронин юлташ цехри профсоюз организацине ертсе пырать. Кабалин юлташ профком членĕ. Кунсăр пуçне вăл цехри токарьсен хушшинче малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе активлă ĕçлет.

П. ЩИПЦОВ.

Канашри ВРЗ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне уявлаççĕ

СОФИЯ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари халăхĕ хăйсен çĕршывне монархистсемпе фашистсен пусмăрĕнчен хăтарнă Совет Çарне чунтан-чĕререн юратать. Çак юрату уйрăмах халĕ, ĕçсыннисем Совет Çарĕ 34 çул тултарнине уявланă вăхăтра, лайăх палăрать.

Енер столицăри «Мускав» ятлă кинотеатра рабочисем, Болгари çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем, шкулсенче вĕренекенсем, оборона ĕçне пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен ирĕклĕ обществăн членĕсем—пĕтĕмпе пин çынна яхăн—чаплă уяв ячĕпе савăнăçлă каçа пухăннă. Пухăва пухăннисем Йонко Панов генерал-лейтенант «Совет Çарĕ—мир çарĕ» темăпа тунă доклада тимлĕ итленĕ. Пухăва пынисем Совет Союзне, Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партине тата никам çĕнтерейми Совет Çарĕн аслă организаторне И. В. Сталин Генералиссимуса чысласа тăвăллă алă çупнă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ кунне уявланă ятпа Хасково, Плевен, Габрово, Димитрово хулисенче тата ытти хуласенче ĕçсыннисен пысăк пухăвĕсем пулса иртнĕ.

* * *

БУДАПЕШТ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри халăхĕ паттăр Совет Çарне чунтан-чĕререн тав тăвать тата юратать. Совет Çарĕ Венгрире ирĕклĕ, мирлĕ пурнăç тума тата ăна никама пăхăнман çĕршыв пулса тăма пулăшнă. Совет Çарĕ Венгрие ирĕке кăларсан, малтанхи кунсенче, Венгри халăхне вăрçă вăхăтĕнче юхăннă, фашистла варварсем аркатса хăварнă хуçалăха юсама пулăшнă. Совет воинĕн ырă кăмăллă та илемлĕ сăн-сăпатне Венгри художникĕсемпе скульпторĕсем чылай произведенисенче сăнласа кăтартнă. Совет воинĕн чаплă сăн-сăпатне «Освобожденная Вена» ятлă кинокартинăра кăтартса панă. Совет воинĕн паттăрлăхĕ çинчен Венгри халăхĕ юрă юрлать. Ялсемпе хуласенчи халăхсем совет паттăрĕсен вилтăприсене ырă кăмăлпа сыхласа усраççĕ. Будапештра тата ытти чылай хуласенче çĕршыва ирĕке кăларнă совет воинĕсене асăнмалăх памятниксем лартнă. Венгри столицин чи лайăх урамĕсене совет полководецĕсен ячĕсене панă.

Халĕ Венгрире пур çĕрте те Совет Çарĕ кунне уявлама хатĕрленеççĕ. Венгрипе Совет Союзĕн обществи çĕнтерӳллĕ Совет Çарĕн историйĕпе паллаштаракан фотовыставкăсем хатĕрленĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче Будапештра тата ытти хуласемпе ялсенче, предприятисенче, производствăллă кооперативсенче, Венгри халăх çарĕн чаçĕсенче Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне уявланă ятпа савăнăçлă пухусем пулаççĕ.

Художествăллă пултарулăх коллективĕсем уяв ячĕпе ятарласа хатĕрленĕ программăсем тăрăх концертсем ирттереççĕ. Çĕршыври кинотеатрсенче Совет Союзĕнче ӳкернĕ фильмсене, Совет Çарĕн пурнăçĕпе паллаштаракан кинокартинăсене кăтартаççĕ.

* * *

БУХАРЕСТ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни халăхĕ Совет Çарĕ—Румынине фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларнă çар 34 çул тултарнине уявлать. Бухарестра тата çĕршыври ытти хуласенче Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çинчен докладсемпе лекцисем ирттереççĕ. Çак кунсенче Румыни столицинчи тата ытти хуласенчи кинотеатрсенче паттăр Совет Çарĕн пурнăçĕпе паллаштаракан кинофильмсен фестивальне ирттерме тытăннă.

Паян Румынири радио тăрăх «Совет Çарĕ—мир çарĕ» темăпа литературăпа музыкăн пысăк концертне панă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРЕН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПЕЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса хăшпĕр вырăнсенче çапăçнă.

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра Халăх çарĕн соединенийĕсем тăшман атакисене ăнăçлă сире-сире янă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 3 истребительне тата пĕр бомбардировщикне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Муньчхонь тата Нампхо районĕсене тапăннă пулнă.

Англи влаçĕсем Малайăра захонсăр ĕçсем тунине хирĕç Китай халăхĕ протестлет

ПЕКИН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Гуанминжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, колониллĕ режима хирĕç кĕрешмелли Пĕтĕм тĕнчери куна ирттернĕ май Фучжоу хулинче Малайăран таврăннă китаецсен митингĕ пулнă. Митингра тухса калакансем Англи империалисчĕсене хытă айăпласа каланă, Англи империалисчĕсем Малайăра Китай гражданĕсене хытă хĕсĕрлени çинчен каласа кăтартнă. Англи влаçĕсем китаецсене концентраци лагерĕсене, тĕрмесене хупаççĕ, тытса хупнă çынсене тискеррĕн асаплантараççĕ.

Митингра 15 çулхи Го Ди-шен сăмах тухса каланă. Вăл Англи империалисчĕсем ятарласа тунă çуртра Китай çыннисен 400 ачине хупса усрани, çав ачасен апат-çимĕçĕсем нумайăшĕ Англи тĕрмисенче вилни çинчен каласа кăтартнă. Çав çуртра 7—16 çулхи ачасене усраççĕ. Вĕсене йывăр ĕçре ĕçлеттереççĕ, салхавсемпе хĕнеççĕ, хывăх çитереççĕ.

Митинга пухăннисем пĕр шухăшлă пулса йышăннă резолюцире Англи влаçĕсенчен Китай эмигранчĕсене ирĕклĕ, пĕр хăрушлăхсăр пурăнмалли тата пурнăçсене сыхласа усрамалли пĕрне тунă, кун пирки шантарса сăмах пама ыйтаççĕ.

АМЕРИКА ОККУПАНЧĔСЕМ ИТАЛИРЕ

РИМ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америка оккупанчĕсем Пиза хули патĕнче çырма тăрăхĕнчи вырăма хăйсен аллине илнĕ. Çак территорие Америка çарĕн Ливорнăри базин влаçĕсене панă. Унта Америка çар склачĕсене тума палăртнă. Çав участокăн хуçи Пиза хулин муниципалитечĕ пулса тăрать. Муниципалитет ку участокра çар базисем тутарасшăн пулман, çапах та ăна Америка çарĕн влаçĕсен аллине панă.

АНСА агентствин асăннă участока Америка çарĕн влаçĕсене парасси çинчен тунă «килĕшĕве» февралĕн 20-мĕшĕнче Ливорно хулинче Америка базин командующийĕ Вассеринг полковник тата Пиза провинцийĕн префекчĕ алă пуса çирĕплетни çинчен пĕлтерет.

РИМ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). АНСА агентстви Америкăн «Милуай» авиаоссийĕ, 4 эскминепа пĕрле, паян Генуя портне пырса çитни çинчен пĕлтерет.

Пĕрлĕхлĕ, мире юратакан Германишĕн!

Германири коммунистсен партийĕн правленийĕ тунă заявлени

БЕРЛИН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес Дейчланд» хаçат Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă аслă державăран пĕтĕм Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтнă пирки Германири коммунистсен партийĕн правленийĕ тунă заявленире мĕн калани çинчен çырать. Çав заявление Дюссельдорфра пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

Пĕтĕм нимĕç халăхĕшĕн историри чи пысăк пĕлтерĕшлĕ самантра Демократиллĕ Германи Республикин правительстви, пĕтĕм нимĕç халăхĕн шухăш-ĕмĕтне палăртса, мире хӳтĕлеме тата пирĕн халăх ирĕклĕ тата пĕрлĕхлĕ условисенче пурăнмалла тăвассишĕн тăрăшма кирли çинчен калать.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă аслă державăна — Совет Союзне, США-на, Англие тата Францие—Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтса чĕнсе калани нимĕç халăхĕн мирлĕ договор тума право пуррине, мирлĕ договор тăвас пирки шантарса Германие Потсдамри килĕшӳсенче уçăмлă сăмах панине палăртать...

Халĕ, юлашкинчен, çичĕ çул иртсен, тăватă аслă державăран хăйсем панă сăмаха пурнăçлама çине тăрса ыйтма нимĕç халăхĕн право пур. Çак требовани тĕнчери çĕршывсем панă право çинче никĕсленсе тăрать, çав право пирки иртнĕ вăрçă—Германи империалисчĕсем пуçарнă вăрçă вĕçленнĕ чухне Потсдамра Германин пуласлăхĕ пирки тунă килĕшӳсенче каланă.

Пирĕн тăвач çĕршывăн хĕвеланăç пайĕнчи халăхăн ытларахăшĕ чунтан-чĕререн мирпе, ирĕклĕхпе тата çĕршыв пĕрлĕхĕшĕн тăрать. Пирĕн тăван çĕршыври халăх, юлашкинчен, вăрçă хăрушлăхĕ хытă хăратса тăнипе хăтăласшăн тата пирĕн нимĕç халăхĕн хальхи положенине—хăйĕншĕн тивĕçлĕ мар положенине пĕтерме тăвасшăн. Хăйĕн çак пуласлăх-ĕмĕчĕсене асра тытса, пирĕн халăх Аденауэр правительствинчен çапла тума ыйтать: Аденауэр правительстви Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе ун патне янă çырупа килĕшмелле, вăл Германипе хăвăртрах мирлĕ договор тума тăватă аслă державăран ыйтнине ырламалла.

Наци умĕнчи ответлăха пĕтĕмпех туйса тăрса Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Германи ыйтăвне хальхи вăхăтри условисенче мирлĕ майпа йĕркелес енĕпе кирлĕ ĕç турĕ.

Нимĕç халăхĕ федеральнăй республикăн федеральнăй парламентĕнчи, политикăллă партисенчи ответлă деятельсенчен вĕсем хăйсен партиллĕ-политикăллă пур интересĕсене те кайри вырăна хăварса, вĕсем халăх мирлĕ договор тутарма тăрăшнине шута илессе, çак ĕçре хăйсен влиянийĕпе усă курасса кĕтет.

Халăхăн малашнехи мирлĕ пурнăçне тăвас пирки сăмах пынă чухне, никам та çак ĕç тулашĕнче юлмалла мар...

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви мирлĕ договор тăвас пирки тăватă аслă державăна чĕнсе калани ăнăçлăхĕшĕн тăрăшас ĕçре Германири коммунистсен партийĕ пур партисемпе те, демократиллĕ пур организацисемпе те, кирек хăш тĕне ĕненекенсемпе те, политикăллă ĕçри пур çынсемпе те, халăхăн пур сийĕсенчи çынсемпе те пĕрле килĕштерсе ĕçлеме хатĕр тăни çинчен пĕлтерет.

Заявлени çапла вĕçленет:

Германири коммунистсен партийĕ çапла пĕлтерет: вăл хăвăртрах мирлĕ договор тăвас тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе хӳтĕлеме, милитаризма çĕнĕрен çĕклентерессине чарса лартма тата çĕнĕ вăрçă—тăвансем пĕр-пĕрне вĕлерсе тăкмалли вăрçă хатĕрлессине чарса лартма тăрăшакан кирек мĕнле правительствăна та миршĕн тăракан мĕнпур çынсемпе пĕрле пулăшса тăрĕ.

Текех тăхтаса тăма юрамасть. Эпир вăрçă пуçланассине сирсе яма тата Германие каллех пĕрлĕхлĕ государство туса хума пултаратпăр. Пĕр-пĕрипе килĕшмесĕр пурăнассине пăрахмалла!

Кашнин хăйĕн уйрăм интересĕсемшĕн çеç тăрăшасси тĕп пултăр!

Тĕрĕс мирлĕ договоршăн, пирĕн тăван çĕршывăн пĕрлĕхне тума, мирлĕ пурнăçра, ирĕклĕ тата демократиллĕ условисенче пурăнма май паракан договоршăн кĕрешсе малалла пырăр.

Хĕвеланăçĕнчи державăсен Лондонри канашлăвĕ пирки

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра Англи, Франци тата США ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем Бонри правительствăн канцлерĕпе—Аденауэрпа канашланă. Вĕсен канашлăвĕ ĕнер хупăннă. Рейтер агентстви çав канашлу çинчен çырнă коммюникене хаçатсем çинче пичетлеме панă.

Коммюникерем çакă курăнать: Лондонри канашлура Хĕвеланăç Европа вăрçа хатĕрленессине вăйлатасси çинчен сӳтсе явнă. Канашлура «Европа çарĕ» текенскерне тăвас ыйту тĕп вырăнта тăнă. «Европа çарĕ» ятпа империалистсем каллех Германин фашистла çарне çĕнĕрен тума шутлаççĕ.

Францийĕ Германи халăхĕсем империалистсен çакăн пек планĕсене хирĕç тăнине, вĕсен хирĕç тăрасси вăйланса пынине Лондонри канашлăва пухăннисен ирĕксĕрех шута илмелле пулнă. Вĕсем пĕр енчен—иртнĕ вăрçăра пайăнтарнă-ран таврăна ĕмĕтленекен Хĕвеланăç Германири правительсен империалистла лагерьте тулли правăллă вырăн йышăнас шутпа кăларса тăратнă требованине тивĕçтерес пирки, тепĕр енчен—Франци правителĕсем кăларса тăратнă требовани пирки каласа татăлса «килĕшӳ тăвас» тĕлĕшпе нумай тăрăшнă. Франци правителĕсем Америка планĕсене пĕтĕмпех ырлаççĕ, анчах вĕсем Америка тăвакан ĕçсене Франци «хăрушсăрлăхĕшĕн» тăрăшса тунă ĕçсем пек кăтартасшăн. Франци ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ США-па Англи хĕçпăшалланнă Хĕвеланăç Германипе Франци пĕр-пĕрне хирĕç вăрçмалла пулмасть тесе шантарса «гаранти» панине илтесшĕн. Çавăн пек шантарса калани Францири реакционерсене общественноçа улталама, Лондонра тунă килĕшĕве Франци хăрушсăрлăхне хӳтĕлес шутпа тунă ĕç пек кăтартма кирлĕ. США-па Англи министрĕсем кун пирки уçăмлăн шантарса каламан, вĕсем, темле уçăмлă мар сăмахсемпе, Франци позицине хăйсем ăнланни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсем Европăри çĕршывсен «оборонишĕн пĕрмаях хытă тăрăшасси» çинчен каланă. Аденауэра вĕсем Хĕвеланăç Германи малашне Атлантика союзĕнче тивĕçлĕ правăсем илесси çинчен шантарса сăмах панă. «Европа çарне» тăвас ĕçе йĕркелесе çитерсен, Хĕвеланăç Германие Атлантика союзне илеççĕ, унăн представителĕсене çав союзăн пур органĕсене те кĕртеççĕ.

Лондонри канашлура халĕ Хĕвеланăç Германири тĕрмесенче ларакан нимĕç çар преступникĕсем тĕлĕшпе йышăннă приговорсене çĕнĕрен пăхса тухса улăштарасси çинчен каласа татăлнă.

Монголипе Совет Союзĕ туслăхĕн уйăхлăхĕ

УЛАН-БАТОР, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи Халăх Республикинче Монголипе Совет Союзĕ туслăхĕн уйăхлăхĕ пуçланнă. Çав уйăхлăх Монголи халăхĕн политикăллă активлăхĕ пысăк пулнине иртет. Аймаксенче сомонсен (районсен) центрĕсенче, предприятисенче, çар чаçĕсенче уйăхлăх пуçланнă ятпа пухусем пулса иртнĕ.

Республика столицине уяв чухнехи пек илемлетнĕ. Урамсенче—Совет Союзĕпе Монголи Халăх Республикин государство ялавĕсем, Монголипе Совет Союзĕ халăхĕсен ĕмĕрлĕх тата çирĕп туслăхĕ çинчен çырнă лозунгсемпе транспарантсем. Нумай çуртсем умĕнче—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕсен В. И. Ленинпа И. В. Сталин портречĕсем, Монголи халăхĕ çулпуçĕсен Сухэ-Баторпа Чойбалсанăн портречĕсем.

Центрти Эльдеб Огиба ячĕпе тăракан кинотеатрта совет халăхĕ коммунизм строительствинче тунă çитĕнӳсене кăтартса паракан пысăк выставка тунă.

Паян Улан-Баторта совет кĕнекисен выставки уçăлнă. Чойбалсан маршал ячĕпе тăракан промкомбинатра Совет Союзĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă çитĕнӳсемпе паллаштаракан выставка уçнă.

Франци колонизаторĕсен Тунисри тискерлĕхĕ

ПАРИЖ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Парижра ирхине тухнă хаçатсем Тунисра çаплах лару-тăру йывăрри çинчен пĕлтереççĕ.

«Либерасьон» хаçат çапла çырать: официальнăй пĕлтерӳсем тăрăх, Франци çарĕпе полици юлашки вăхăтра Сфакспа Сус хулисен районĕсенче ухтарса çӳренĕ, «шанчăксăр çынсенчен» тасатас тĕлĕшпе операцисем ирттернĕ. Çавăн чухне Тунисăн 139 патриотне тытса хупнă.

«Юманите» хаçат Тунисри сывлăх министрĕ бен Салемăн официальнăй пĕлтерĕвне пичетленĕ. Унта Франци салтакĕсем Тазерка хулинче Тунис çыннисен тăватă ачине тискеррĕн вĕлерни çинчен пĕлтернĕ, çав ачасен ячĕсене çырса тухнă. Вĕсем пĕр çула çитеймен ачасем пулнă. Пĕлтерӳре Франци карателĕсем 5 уйăхри пĕр ачана амăшĕ аллинчен туртса илни, ăна çĕр çине пăрахса вĕлерни çинчен каланă. Кăкăр ĕмекен тепĕр ачана Франци салтакĕ урипе таптаса вĕлернĕ.

Çавăн пек питĕ тискер ĕçсене Франци командованийĕн приказĕ тăрăх тата Франци правительствин инструкцийĕсене пурнăçласа туса пынине палăртать «Юманите» хаçат.

Финлянди общественноçĕ Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине палăртать

ХЕЛЬСИНКИ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă май, Финляндипе Совет Союзĕн обществи февралĕн 19-мĕшĕнче общественноçа совет кинофильмĕсене — «Первое Мая» тата «В мирные дни» ятлă фильмсене кăтартнă.

Кинофильмсене пăхнă çĕрте оборона министрĕ Скуг, Финляндин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн представителĕсем, общественность представителĕсем, ССР Союзĕн Финляндири посланникĕ Лебедев, ССР Союзĕн Финляндири çар атташи Рыбаков полковник, халăх демократи çĕршывĕсемпе Китай Халăх Республикин дипломати представителĕсем пулнă.

Болгари халăхĕ Н. В. Гоголе хисеплесе асăнать

СОФИЯ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнине палăртнă кунсенче Болгарипе Совет Союзĕ обществисен союзĕ София хулинче вырăссен генийллĕ писателĕн пурнăçĕпе тата творчествипе паллаштаракан выставка организациленĕ. Пловдивпа Русе хулисенче те çак кунсенче Гоголь пурнăçĕпе паллаштаракан выставкăсем уçаççĕ. Болгарипе ССР Союзĕ обществисен союзĕн центральнăй совечĕ Н. В. Гоголь çинчен кĕнеке пичетлесе кăларнă. Унăн тиражĕ пысăк. Писатель портретне 20 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. Н. В. Гоголь пурнăçĕпе тата творчествипе паллаштарма ятарласа тунă куçарса çӳремелли выставкăсене çĕршыври околисен пур центрĕсене те ярассĕ.

Çĕршывра вырăс чĕлхипе вĕренмелли курссем нумай ĕçлеççĕ. Çав курссенче Гоголь произведенийĕсен сыпăкĕсене вырăсла вуласа тухмалли сехетсем уйăрнă.

Софийăри радио Гоголь пурнăçĕпе тата творчествипе паллаштарма ятарласа передачăсем организацилет, радио тăрăх Болгарири паллă писательсем, литература енĕпе ĕçлекенсем, артистсем тухса калаççĕ.

Трахома чирĕпе кĕрешекен институтăн научнăй конференцийĕ

Февралĕн 18—19-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăвашсен трахома чирĕпе кĕрешекен институчĕн научнăй конференцийĕ пулса иртрĕ.

Шупашкарти тата районсенчи врач-окулистсемсĕр пуçне конференцире Тутар, Мари, Мордва, Пушкăрт, Удмурт республикисенчен, Горький, Саратов, Киров, Кемерово, Куйбышев, Свердловск, Тюмень, Ульяновск, Челябинск, Чкалов тата Молотов облаçĕсенчен, Алтай крайĕнчен, Мускавпа Ленинград хулисенчен килнĕ окулистсем пулчĕç.

Конференци ĕçне çавăн пекех Медицина Наукисен академийĕн член-корреспонденчĕ профессор М. П. Чумаков юлташ хутшăнчĕ.

Конференцие Чăваш АССР Сывлăх министрĕ В. Ефимова юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

Трахома чирне пĕтĕрес ĕç мĕнле пыни çинчен Чăваш АССР Сывлăх министерствин главнăй окулисчĕ А. Шульпенкова юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик çакна палăртрĕ: большевиксен партийĕпе Совет правительстви ĕçсыннисен пурнăçпа ĕçлә условийĕсене лайăхлатассишĕн тăрăшни сывлăха сыхлас ĕç хăвăрт аталанса пынинче те лайăх палăрса тăрать.

Совет офтолмологийĕ тĕнчере малта пыракан наука пулса тăрать. Совет офтолмологĕсен — Филатовпа Чирковский академиксен наукăллă ĕçĕсем куç чирĕсемпе кĕрешес ĕçре питех те пысăк ӳсĕмсем тума май панă. Совет медицинин хальхи таçхăрти аталанăвĕ трахома чирне татăклăн пĕтерме май парать.

РСФСР Министрĕсен Совечĕ хăйĕн решенийĕнче трахомăпа кĕрешес тĕлĕшпе медицина работникĕсем çине пысăк ответлăх хунă:

— Иртнĕ çулта пирĕн республикăра,—тет докладчик,—трахома чирĕпе кĕрешес ĕçре паллă çитĕнӳсем тунă. Чылай çĕрте больницăсемпе медицина пункчĕсем ĕçе вăйлатрĕç. Партипе правительство халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли укçа-тенкĕ шеллемеççĕ. Пирĕн республикăна Совет правительстви ку тĕлĕшпе уйрăмах пысăк пулăшусем парса пырать. Куç чирĕсемпе кĕрешме медицина учрежденийĕсем валли правительство çĕнĕ йышши медикаментсем, паха оборудованисемпе инструментсем нумай уйăрса парать. Республикăри больницăсенче куç чирĕнчен сыватмалли койкăсен хисепĕ, çавăн пекех врач-окулистсен йышĕ нумай хутшăннă.

— Чăваш АССР Сывлăх министерствин тата трахома чирĕпе кĕрешекен институтăн,—тет юлашкинчен докладчик,—куç чирĕсенчен ăмăллес ĕçе, профилактикăллă ĕçсене малашнехи вăхăтра татăклăнах вăйлатмалла, çак ĕçе медицина работникĕсемпе совет общественноçне анлăрах хутшăнтармалла.

«Трахома чирĕн сăлтавĕсене тĕпчесе сăнас енĕпе тунă çĕнĕ ĕçсем çинчен» профессор М. Чумаков юлташ доклад турĕ. Вăл çакна палăртрĕ: трахома чирĕ мĕнрен пуçланса кайнине халĕ совет медицини лайăх пĕлсе çитнĕ. Трахома чирĕ уйрăм йышши вируссем урлă сарăлса пынине юлашки çулсенчи наукăллă ĕçсем лайăх кăтартса параççĕ.

Профессор Чумаков юлташ совет медицини юлашки çулсенче трахома чирĕпе кĕрешме çĕнĕ хăватлă препаратсем—синтемицин, ауреомицин, терромицин шутласа кăларни çинчен пĕлтерчĕ. СССР Сывлăх министерстви трахома чирĕпе кĕрешес ĕçре синтомицинпа анлăн усă курма йышăннă. Хальхи вăхăтра çак мелпе Чăваш республикинче те массăллăн усă кураççĕ. Ку амел сиплĕхлĕ пулнине медицина работникĕсен практики лайăх кăтартса парать. Çак амелпе трахома чирне хирĕç кĕрешес ĕçре тĕрĕс йĕркелесен, ку чире çитес сывăх вăхăтрах ăнăçлă пĕтерме май пулать,—терĕ профессор.

Трахома чирĕпе кĕрешекен институт директорĕ А. Васильева юлташ «Пĕчĕк ачасене трахома чирĕнчен синтомицинпа сыватни çинчен» доклад турĕ. Медицина наукисен кандидачĕ А. Шульпенкова юлташ «Шкул ачисене трахома чирĕнчен синтомицинпа сыватас ĕçе йĕркелесси çинчен», В. Дожженко юлташ «Трахома чирĕнчен синтомицинпа сыватасси çинчен», медицина наукисен кандидачĕ Ц. Каменская юлташ «Трахома чирĕнчен хлоромицетин порошокĕпе сыватасси çинчен» докладсем туса пачĕç.

Кун хыççăн Н. Луппова, П. Журина, А. Васильева юлташсем трахома чирĕпе кĕрешес ыйтусем тăрăх наукăллă докладсем туса пачĕç.

Доцент Ф. Сысоев юлташ Удмурт республикинче трахома чирĕпе кĕрешес ĕç мĕнле пыни çинчен; медицина наукисен кандидачĕ Ц. Иоффе юлташ (Мускав хулинчен) куç чирĕпе пулса иртнĕ Пĕтĕм Союзри конференцин итогĕсем çинчен каласа пачĕç.

«Гипертони чирĕпе чирлекенсен куç тĕпĕ мĕнле улшăнса пыни çинчен» медицина наукисен кандидачĕ А. Сунонщикова юлташ (Ленинград хулинчен) доклад туса пачĕ.

Докладсем тăрăх прение çак юлташсем тухса каларĕç: профессор М. Чумаков, А. Витнова (Хусан), С. Доброва (Чкалов), Е. Павлов (Пошкар-Ола), З. Дюдина (Саранск), А. Одинцева (Ленинград), А. Кость (Саратов) тата ыттисем те.

Чăваш писателĕсен союзĕнче

Февралĕн 20-мĕшĕнче Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленин поэзи секцийĕ Уйăп Мишшин ачасем валли çырнă сăввисене сӳтсе яврĕ.

Автор сăвăсемпе паллаштарнă хыççăн, Н. Ильбек, В. Давыдов, Н. Евстафьев, С. Павлов, С. Шавлы, Л. Агаков, А. Алга, Г. Ефимов юлташсем тата педагогика институтĕнче вĕренекен студентсем тухса каларĕç. Вĕсем, поэт ачасем валли сăвăсем çырса, чылай çитĕнӳсем тунине палăртрĕç. Тухса калакансем Уйăп Мишшин «Январĕн 21-мĕшĕ», «Çурхи вăйă», «Сад эрни», «Пучах пуçтаратпăр», «Пограничник», «Икĕ тус», «Лагере каятпăр», «Савăнăçлă хыпар» сăввисене уйрăмах ырласа йышăнчĕç. Вĕсем çавăн пекех сăвăсенчи çитменлĕхсене те палăртрĕç.

Тухса калакансем, сăвăсене уйрăм сборник туса пичетлесе кăлариччен, тепĕр хут пăхса тухма, çитменлĕхсене юсама хушса хăварчĕç.

Уйăп Мишши хăйне паха сĕнӳсем панăшăн тав турĕ, ачасем валли çĕнĕ произведенисем çырас тĕлĕшпе малашне те тăрăшса ĕçлеме сăмах пачĕ.

Ларура поэзи секцине ертсе пыма виçĕ çынтан бюро суйласа хăварчĕç, унта С. Шавлы, П. Хусанкай, М. Уйăп поэтсене суйларĕç.

Н. В. Гоголь юбилейĕ умĕн

ЭЛĔК. Район центрĕнчи библиотека вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленет. Писателĕн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставкăна йĕркеленĕ. Литература касĕнче драма кружокĕ «Авлану» комедие выляса пама хатĕрленет, художествăллă пултарулăх коллективĕн членĕсем Гоголь произведенийĕсенчен илнĕ уйрăм сыпăксене вуласа параççĕ.

С. ТИХОНОВ.

Ялти радиоузелсем

ВАРМАР. Районта 5 çул каялла пурĕ те пĕр радиоузел кăна пулнă. Халĕ «Дружба», «Хĕрлĕ Кĕтне», Кив Вăрмарти «Большевик», «Свобода» Тикашри «Большевик», «Победа», «Путь Ленина» колхозсене радиофикацилесе çитернĕ.

Кăçал радиофикаци ĕçне татах вăйлатаççĕ, «Авангард», «Хĕрлĕ Мăрат», «Коммунизм» колхозсене радио кунĕ тĕлне радиофикацилесе çитерме палăртнă.

Г. МАТВЕЕВ.

Таварсем сутасси ӳсет

СЕНТЕРВĂРРИ. Хулара та, ялсенче те суту-илӳ çултан-çул вăйланса пырать. Иртнĕ çулта районти ĕçсыннисем нумай тĕрлĕ таварсем 1950 çулхинчен 1.580 пин тенкĕлĕх ытларах туяннă.

Ĕçсыннисен ыйтăвĕсене Шуркассинчи ялпо (правлени председателĕ Петров юлташ) лайăх тивĕçтерсе пырать. Иртнĕ çулта вăл тавар çавăрăнăшĕн планне 106 процент тултарнă. Ялпо работникĕсенчен уйрăмах Иванова, Андреев юлташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Астакассинчи ялпо та (правлени председателĕ Кудрявцев юлташ) лайăх ĕçлет. Инвалидсен «Социализм» артелĕ суту-илӳ ĕçне аван йĕркеленĕ. Вăл плана палăртнинчен икĕ хут нумайрах таварсем сутнă.

Ача амăшĕсемшĕн тăрăшни

КӲКЕС. Ача амăшĕсене пулăшас ĕç районта вăйлансах пырать. Хальхи вăхăтра государствăран ача амăшĕсем 1.235 çын пулăшу илсе тăраççĕ. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче тухнă Указĕ тăрăх, юлашки икĕ çулта нумай ачаллă амăшĕсемпе пĕччен пурăнакан ача амăшĕсене 1.920 пин тенкĕ укçа парса пулăшнă. Вăл шутран ача амăшĕ-героиньăсем—Иккассинчи «1-ое Мая» колхоз членĕ К. Павлова тата Паçпакри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ—А. Кондратьева 35—40-шер пин тенкĕ илнĕ.

Ача амăшĕсене 1.028 çынна орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, вырăсла спектакль «МОЛОДОЙ ЧЕЛОВЕК»

Ыран, февралĕн 24-мĕшĕнче, кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль «ЖЕНИТЬБА»

Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи—20 сехетре пуçланать.

„Родина" кинотеатрта

Паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, «СТАЛИНГРАДСКАЯ БИТВА» (иккĕмĕш сери)

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00330 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.